Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАЙ 16 ТУНТИКУН
110 (4923) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать · ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ · Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Оборонă ĕçне çÿлĕ пусăма

Сталин йулташ Иванов йулташа панă ответра çапла каланă: „... хамăрăн Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ Флота, Хĕрлĕ авиацине, Осоавиахима вăйлатни тата тĕреклетни кирлĕ. Нимĕнле „ансăртлăх" та тата пирĕн тулти тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен пырса ан тивчĕр, тесе хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытса тăмала".

Сталин йулташăн çак сăмахĕсем Советлă Социалисăмла Республикăсен Сойузĕ çине капиталисăмла государства йенчен вăрçăпа тапăнас хăрушлăх нихçанхинчен те ытларах ÿснĕ, чăннипе илсен, пĕтĕм тĕнче пысăк вăрçăсен ларутăрунĕ кĕнĕ условисенче социалисăмла тăван çĕршыв çине капиталисăмла государствăсем тапăнассинчен, хамăр çĕршыва вăрçă интервенципе реставраци хăрушлăхĕнчен хÿтлесе тăрас ĕçĕн программи пулать.

„ССР Сойузĕ мирлĕ политикăна çирĕп тытса пырать. Вăл вăрçă чĕртсе йаракан капиталисăмла государствăсен, чи малтан фашисла çĕршывсен правительствисен агресçилĕ политикипе, планĕсене тата ĕçĕсене пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен умĕнче тăрă шыв çине кăларать. Совет Сойузĕ хăйĕн политикипе, хăйĕн ĕçĕпе пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисене миршĕн, фашисăма хирĕç мĕнле кĕрешмеллине çул кăтартса парать.

Анчах та пирĕн çĕршыв утрав çинче пурăнмасть, ăна капиталисăмла çĕршывсем хупăрласа тăрассĕ. „Капиталисăмла йĕритавралăх пур чухне вăрçăла интервенципе реставраци пулма пултараймасть, тесе тăмпайсем, йе хăйсем пире курайманнине мухтанчăклăхпа витсе хума тата халăха демобилизацилеме тăрăшакан вăрттăн тăшмансем çеç калама пултарассĕ" (Сталин).

Хамăрăн тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетесси—пĕтĕм совет халăхĕн хисеплĕ ĕçĕ. Кашни хапрăк, кашни сават, колхоз, совхоз, МТС çĕршыв оборонин хăватлă крепăçĕ пулса тăмала, кашни ĕççынни тăшман пирĕн ирĕклĕ çĕршыв çине, нумай мĕлйунлă совет халăхĕн мирлĕ ĕçĕ çине тапăнасран сыхă тăмала, ăна çапса аркатма йалан хатĕр пулмала.

Çĕршывăн оборонине тĕреклетесси вăл, Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ Флота, авиацине тĕреклетнисĕр пуçне тата халăх хушшинче массăлă оборонă ĕçне анлăн сарса йарассине пĕлтерет. Хапрăк-саватсенче, колхозсенче, совхозсенче, МТС-че массăлă оборонă ĕçне вăйлатас ĕçре совет патриочĕсен нумай мĕлйунлă ирĕклĕ обичествин—Осоавиахим пысăк вырăнта тăрать. Осоавиахим обичествин, унăн вырăнсенчи организацисен задачĕ—тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетесе ĕçе ĕçхалăхĕн йышлă массине активлăн хутшăнтарасси пулать.

Пире вăйлă Осоавиахим, çирĕп, ĕçлеме пултаракан пуçламĕш организацисем кирлĕ.

Анчах та пирĕн республикăри Осоавиахим организацисем çак пысăк та хисеплĕ задача пурнăçлас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ-ха. Троцкисла-бухаринла шпионсемпе диверсантсем Осоавиахим пуçламĕш организацисене пур майсемпе салатса йама, вĕсене массăран уйăрса йама, оборонăн чĕрĕ ĕçĕсĕр тăратса хăварма тăрăшнă. Вĕрсе кăпартнă цифăрсем кăтартса вĕсем Осоавиахим организацисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене совет халăхĕ умĕнче пытарма тăрăшнă. „Вилĕ чунсене" ĕрчетнĕ. Хут çинче организаци йышĕ те пысăк, членсен хисепĕ те нумай пулнă, анчах пурнăçра вĕсем вырăнне ĕçлемен организацисен йышĕ нумайланнă. Осоавиахим хуçалăхне салатса, пăсса пĕтернипе вырăнсенче оборонă ĕçне организацилессине картласа пынă.

Осоавиахим организацин ĕçĕсене чĕртсе йама, вĕсене ĕçхалăхĕн пысăк массине оборонă ĕçне хутшăнтаракан вăйлă организацисем туса йама кирлĕ пирвайхи услови вăл—Осоавиахим организацисенче тăшмансем сăтăрла сийенлĕхĕн йулашкисене кĕске вăхăтра пĕтересси пулать. Çак йенĕпе Осоавиахимăн Чăваш совечĕ те, районсенчи советсем те начар ĕçлеççĕ-ха.

Пирĕн республикре 1688 колхоз, вĕсенчен 729-шĕнче çеç Осоавиахим организацийĕсем пур. Уйрăм районсенче Осоавиахим организацисемпе членĕсен хисепĕ ÿсес вырăнне чакса пырассĕ. Çапла, Вăрмар районĕнче 1937 çулти октйабĕрĕн 1-мĕш тĕлне Осоавиахим членĕсем 1280 çын пулнă пулсан, кăçалхи апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне 946 член çеç йулнă. Ку ĕнтĕ районти Осоавиахим совечĕ пуçламĕш организацисене пуçĕпех йертсе пыманни çинчен калать. Çакă вăл Осоавиахимăн Чăваш совечĕ те, парти райкомĕсем те чылайĕшĕ Осоавиахим организацисене кирлĕ пек йертсе пыманни çинчен калать. Тăшмансен сăтăрла сийенлĕхĕн йулашкисене пĕтерес тени, чи малтан, колхозсенче, предприйатисенче халĕ ĕçлекен организацисене ĕçлеме пултаракан паттăр организацисем туса йарассине, кашни колхозра, предприйатире Осоавиахим организацисем туса унта ĕççыннисене нумайăн хутшăнтармала тăвассине пĕлтерет.

Осоавиахим организацисен йалсенче оборонă çурчĕсемпе кĕтессене уçас, Ворошилăв пек тĕл перекенсем, ПВХО значокĕсене илме нормăсем парас, кавалериссем хатĕрлес, ĕççыннисене тĕрлĕ майсем çар ĕçне массăлăн вĕрентес ĕçсене пуçармала, вĕсене организацилемеле. Анчах çак ĕçре пирĕн Осоавиахим организацисен пуçарулăх, хăйулăх, организацилĕ пултарулăх çителĕксĕр.

Осоавиахим темиçе мĕлйун çынна çар ĕçне вĕрентмеле. Колхозсенче, совхозсенче, предприйатисенче çар ĕçне вĕренес ĕçе организацилемеле. Осоавиахим вĕрентнĕ стрелоксен мелкокалибĕрла пăшала кăна мар, винтовкăна та тыткалама, унпа тăшмана хирĕç çапăçура тыткалама пĕлмеле. Пирĕн лётчик-наблюдателсем, авиотехниксем, штурмансем, кавалериссем, снайперсем вĕрентсе хатĕрлемеле, пур йалсемпе хуласенче те сывлăшран химипе тапăннинчен сыхланмали отрйадсем, самозащитă ушкăнĕсем пулмала.

Аероклубсен ĕçне нумай лайăхлатмала. Вĕсенче вĕренме чи лайăх, чи шанчăклă, чи пултарулă ĕççамрăкĕсене илмеле. Аероклубсенче политикăла воспитани ĕçне те авиаци техникине алла илес ĕçе çÿле çĕклемеле.

Массăллă оборонă ĕçĕнче комсомол пысăк вырăнта тăрать. Комсомол организацисен ĕç çамрăкĕсене тăван çĕршывăн патриочĕсем, социалисăм ĕçĕшĕн, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса кĕрешекенсем туса вĕрентсе çитĕнтермеле. Совет çамрăкĕсене производствăран уйăрмасăр чаплă лётчиксем, пулеметчиксем, артиллериссем, снайперсем, парашютиссем, планериссем т. ыт. пулма вĕрентмеле. Комсомол организацисен вĕсене пулăшмала.

Массăлă оборонă ĕçне организацилессинче уйрăмах советсем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Кашни йалсовечĕ çумĕнчех оборонă çекцисем пур. Анчах чылайĕшĕ начар ĕçлеççĕ-ха. Йалсовечĕсем вĕсен ĕçĕсем çинчен уйав кунĕсенче кăна аса илеççĕ. Райĕçтăвкомсене илес пулсан, вĕсем вара йалсоветсем çумĕнчи оборонă çекцисем çинчен мансах кайнă. Райĕçтăвком президиумĕнче йалсовет çекцисен отчочĕсем тăрсан та, нумай-нумай финанс çекци, çавăн пекех хатĕрлев çекцисен отчочĕсем тăма пултарассĕ. Анчах оборонă çекци отчотне итленипе мухтанма пултаракан райĕçтăвком çукпа пĕрех вара. Райĕçтăвкомсемпе йалсоветсен оборонă çекци ĕçĕсемпе уйав кунĕнче çеç интересленмеле мар, оборонă çекци ĕçĕсене йертсе пырасси вĕсен кулленхи ĕçĕ пулмала. Оборонă çекцисене чăннипех те йалти оборонă ĕçĕн организатăрĕсем туса хумала. Осоавиахим, физкултурăпа спорт организацисене конкретлă пулăшу памала. Çĕршыв оборонине тĕреклетес ĕç чăннипех пĕтĕм халăх ĕçĕ пулса тăтăр.

Сталин йулташ çĕршывăн оборонине тĕреклетмели программă пачĕ. Сталин йулташ хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытмала, тесе кăтартса панине пурнăçа кĕртсе, Осоавиахим, комсомол организацисен, советсен, профсойузсен хăйсен массăлă оборонă ĕçне нихçанхинчен ытларах вăйлатмала. Çак ĕçре вĕсене парти организацисен йертсе, пулăшса пымала.

Сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен депутачĕсем пулма кандидата Совет халăхĕ рабочисемпе хресченсен телейĕшĕн пĕр пăркаланмасăр кĕрешекен борецсене палăртать

Сталин тата Молăтăв йулташсем—Мускав суйлавçисен пĕрремĕш кандидачĕсем

Мускав ĕççыннийĕсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем палăртма тытăннă. Суйлав умĕнхи пысăк пухусенчен пĕри майăн 14-мĕшĕнче малтан електрокомбинат пулнă саватра пулса иртнĕ. Пуху калама çук пысăк çĕкленÿпе иртнĕ. Унта 15 пин çын пулнă.

Чи малтан автотрактăр тата електрооборутăвани тăвакан саватри партире тăман рабочи Сенин йулташ тухса каланă.

Пĕтĕм пуху тăвăллăн алă çупнипе Сенин йулташ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Конституцине тăвакана, халăхăн аслă çулпуçне Иосиф Виссарионăвич Сталина палăртнă.

— Сталин йулташ йертсе пынипе епĕр савăнăçлă та телейлĕ пурнăç турăмăр, çавăнпа епĕ ăна Верховнăй Совет депутатне суйлама кандидата палăртатăп, тенĕ Сенин йулташ.

Сталин йулташ пирĕн телейе кăна тăваканни пулса тăмасть, вăл тата пирĕн ачасен телейне туса параканни те пулса тăрать, çавăнпа епĕ ăна палăртатăп.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ епĕ, партире тăман рабочи, производствăра 35 çул хушши ĕçленĕскер, Сталин йулташа пирĕн Стальински суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртатăп.

Сенин йулташ сĕнĕвне хĕрÿлĕн, пĕр шухăшлăн пулнипе йышăннă.

Власăвă тата Алексейĕвă работницăсем, инженер Алексейенко тата ыт. те хумханулă сăмахсем тухса каланă. Вĕсем 1938 çулхи ийунĕн 26-мĕшĕнчи суйлавсенче коммунисcемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнĕ çĕнтерÿсем тăвассишĕн кĕрешме чĕнсе каланă.

Пуху пĕр шухăшлăн пулнипе çакăн пек постановлени йышăннă—Иосиф Виссарионăвич Сталина РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртас.

Пĕрлехи пуху Сталин йулташран Мускаври Сталински суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтнă.

Пуху Ленин—Сталин партине чысласа, Сталин йулташа чысласа тăвăллăн алă çупнипе тата „урра" кăшкăрнипе хупăннă.

* * *

Клара Цеткин йачĕпе тăракан çĕнĕ хапрăкĕнчи суйлав умĕнхи пуху пысăк çĕкленÿпе пулса иртнĕ. Пухура работницăсем, рабочисем, инженерсем, техниксем тата служăшчисем пурĕ 5 пин çын пулнă.

Бригадир Крайнĕвă йулташ, производствăра 23 çул ĕçленĕскер, РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Сталин йулташăн çывăх соратникне, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателне В. М. Молăтăв йулташа тăратма сĕннĕ. Çак сĕнĕве пуху нумайччен хĕрÿлĕн оваци тунипе кĕтсе илнĕ.

Тимофейĕвă, Короłкова тата ытти работницăсем тухса каланисем Совет патриотисĕмĕн çуламлă туйăмĕпе, социалисăмла тăван çĕршывпа мухтаннă тата ăна чĕререн йуратнă туйăмпа тулли пулнă.

Пуху В. М. Молăтăв йулташ кандидатурине тăратасси çинчен пурте пĕр шухăшлăн пулнипе постановлени йышăннă тата В. М. Молăтăв йулташран Мускаври Молăтăвски суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Совета депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшÿ пама ыйтнă.

(ТАСС).

Халăхăн чи лайăх ывăлĕсене—Украинă Верховнăй Советне

Украинăра суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕсем пуçланнă.

Украинă столицинчи чи пысăк предприйатинчи—Кийĕври машинăсем тăвакан „Болшевик" саватĕнчи коллективăн суйлав умĕнхи пухăвĕ пысăк хавхаланупа пулса иртнĕ. Пухура 3.500 çын пулнă.

Ватă рабочи, стаханăвец Й. К. Крикуха йулташ хăйĕн тухса каланă сăмахĕнче çапла каланă:

— Епĕр пирĕн чечекленсе ÿсекен социалисăмлă Украинăн Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем палăртас йатпа пулнă суйлав умĕнхи пухăва пысăк хаваслăхпа килтĕмĕр. Депутата суйлама епĕ пĕрремĕш кандидата пирĕн хаклă, хамăр хĕрÿлĕн йуратакан çулпуçа тата тусăмăра Иосиф Виссарионăвич Сталина палăртма сĕнетĕп.

Хăйĕн ирĕклĕ, савăнăçлă, пуйан пурнăçĕшĕн Украинă халăхĕ Сталин йулташа тивĕçлĕ. Пирĕн ачасене телейлĕ çамрăклăх кам туса панă-ха?—Сталин! Пире, ватă çынсене, ватлăхри савăнăça кам туса панă-ха? Сталин!

Халăх тăшманĕсем—троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла бандитсем—нимĕç маркисемшĕн, Йапони тата Полша укçитенкисемшĕн пире тата пирĕн çĕре сутма хăтланчĕç. Вĕсем ĕмĕтленни пурнăçа кĕреймерĕ, кĕрес те çук! Ан манччăр фашисем: 170 мĕлйунла ирĕклĕ халăх Сталин йулташ йертсе пынипе пирĕн тăван çĕршыв çине тапăнма пăхакан пур тăшмансене те çĕмĕрсе аркатса пынă тата малашне те çĕмĕрсе аркатса пырĕ.

Пуху калама çук пысăк çĕкленÿпе Украинă СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсене И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, К. Е. Ворошилăв, А. И. Микойан, Н. И. Йежов, Н. С. Хрущчов, М. А. Бурмистенкă, Д. С. Коротченко, А. И. Успенски, С. К. Тимошенко йулташсене палăртма йышăннă.

Пуху Сталин йулташ патне саламлă çыру йанă.

(ТАСС).

—о—

Белоруççи СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйламали пĕрремĕш кандидатсем

Минскра Белоруççи СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем палăртас йатпа суйлав умĕнхи пухусем пулса иртеççĕ. Л. М. Каганович йачĕпе тăракан ата-пушмак çĕлекен хапрăкри рабочисен суйлав умĕнхи пухăвĕнче 1.420 çын пулнă.

Пуху пурте пĕр шухăшлăн пулнипе Белоруççи СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсене И. В. Сталин, В. М. Молăтăв, Л. М. Каганович, М. И. Калинин, К. Е. Ворошилăв, Н. И. Йежов, Белоруççи К(б)П Тĕпком çекретарне А. А. Волкăв, Белоруççи СС Республикĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет ĕçĕсене туса пыракан Н. Й. Наталевич, Белоруççи СС Республикĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссарне Б. Д. Берман йулташсене палăртма йышăннă.

(ТАСС).

Государствă социаллă страхованийĕн 1938 çулхи бÿджечĕ

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕ тăратнă государствă социаллă страхованийĕн 1938 çулхи бÿджетне çирĕплетнĕ.

Бÿджетăн тухут пайне 6.323 мĕлйун тенкĕлĕх çирĕплетнĕ. Бÿджетăн расхут пайĕ 5.900 мĕлйун тенкĕ шутланать.

Расхутăн пĕтĕм хисепĕнчен 3.465.600 пин тенкине пособисемпе пенсисем тÿленĕ çĕре йама палăртнă; 654.400 пин тенкĕ—ачасене пăхас çĕрте усă курма каймала; 1.034.200 пин тенкĕ—канмали çуртсем, санаторисем тата курортсем валли каймала; 50.000 пин тенкĕ—турисăмпа алпинисăм ĕçне вăйлатас çĕре йама палăртнă; 147.900 пин тенкĕ — физкултурă ĕçне каймала; социаллă страховани бÿджетĕнчен емелсем илес ĕçсене кайакан расхутсем 99.600 пин тенкĕ шутланаççĕ; рабочисемпе служăшчисен пулăшу кассисен дотацисене валли 104.200 пин тенкĕ уйăрса хунă; културăпа канy паркĕсем валли—27.000 пин тенкĕ; çутта кăларас ĕç валли—84.100 пин тенкĕ; врачсен контролĕ валли—19.500 пин тенкĕ, ĕç инспекцийĕ валли—78.500 пин тенкĕ; страховани ĕçĕнче ĕçлекен актива премисем пама—5.000 пин тенкĕ; социаллă страхованийĕн организацилĕ административлă расхучĕсем валли—80.000 пин тенкĕ уйăрса панă.

Государствă социаллă страхованийĕн 1938 çулхи бÿджетне çирĕплетесси çинчен йышăннă постановленинче ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулта профсойузсем социаллă страховани йенĕпе ĕçе лайăхлатни çинчен палăртнă. Предприйатисенче тата учрежденисенче, хапрăксемпе саватсенче тата вырăнти комитетсенче тунă социаллă страховани ĕçĕ тĕлĕшпе ĕçлекен советсем ĕçе лайăхлатма пулăшнă, вĕсем чирленĕ рабочисемпе служăшчисене хăйсен килĕсенчех пулăшу парас ĕçе лайăхлатма пулăшнă; вĕсем çапла ĕçленĕ пирки пулницă листокĕсем тĕрĕс парас çĕрте контрол туса пырас ĕç те лайăхланнă. Служăшчисене пулăшусем парас йенпе рабочисен категорипе танлаштарнă май тата ваталсан вĕсене пенси памала тунă май, вĕсен социаллă страхованийĕ чылайах лайăхланнă. Канмали çуртсене, санаторисене тата курортсене кайакан рабочисемпе служăшчисен хисепĕ ÿснĕ; йăвăр çын пулсан тата ача çуратсан паракан пособисем, ачасене усă курас ĕçсене, физкултурă, турисăм ĕçне тата ытти çавăн пек ĕçе вăйлатас çĕре кайакан укçа-тенкĕсен хисепĕ те чылайах ÿснĕ.

Ĕç условисем лайăхланнă май, ĕççыннисен пурнăçĕ, çавăн пекех тата страхланисене медицинă пулăшăвĕ парасси лайăхланнă май, çынсем чирлесси чакнă.

1937 çулта страховкă тарифĕсен реформине туса иртерни социаллă страхованийĕн укçа-тенкĕ çиçтемине тата страхланисене пулăшусем парассине йĕркене кĕртсе çитерме пулăшнă.

Çитĕнÿсемпе пĕрлех ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ социаллă страховани тĕлĕшпе професçилĕ сойузсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине те палăртнă: а) социаллă страховани ĕçĕ тĕлĕшпе ĕçлекен советсем социаллă страховани ĕçне рабочисен массисене, уйрăмах хĕрарăмсене, сарлакан хутшăнтарма пултарайман; б) государствă социаллă страховани ĕçне расхутланă укçа-тенкĕсем çинчен профсойузсем рабочисемпе служăшчисен сарлака массисем умĕнче отчотсем туса паман; в) страховани йенĕпе расхутланакан укçа-тенкĕсене ревиçи тăвас ĕçе çителĕксĕр лартнă; г) канмали çуртсемпе санаторисен строителстви валли панă укçа-тенкĕсемпе çителĕклĕ таран усă курман (1937 çулхи строителствă планне 58 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ).

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Совечĕ йăвăр çын пулсан тата ача çуратсан памали пособисене 991,5 мĕлйун тенке çити ÿстерме сĕннине ырланă. Йăвăр çын пулсан тата ача çуратсан памали пособисем 1937 çулта 785,6 мĕлйун тенкĕ, 1936 çулта 376 мĕлйун тенкĕ шутланнă; канмали çуртсене, санаторисене тата курортсене кайакан рабочисемпе служăшчисен хисепĕ, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 348 пин çын чухлĕ ÿсмеле; пионер лагĕрĕсен хисепĕ те чылайах пысăкланмала: çав лагĕрсене йамали ачасен хисепĕ çак çулта 398 пин çынна çити ÿсмеле, иртнĕ çулта 309 пин ача пулнă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулта хуçалăх организацисем тата ытти учрежденисем йенчен пионер лагĕрĕсем валли укçа-тенкĕ парас тĕлĕшпе иртнĕ çулхи йĕркенех хăвармала тунă. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла тумала йышăннă: пионер лагĕрĕсем професçилĕ сойузсен аллинче пулмала, вĕсене хапрăксемпе саватсенчи тата вырăнти комитетсем йертсе пымала, малашне пионер лагĕрĕсене уйрăм çĕрте мар, предприйатисемпе учрежденисенче тумала.

Професçилĕ сойузсен Тĕп Комитечĕсене профсойузăн 1938 çулхи бÿджетĕнчен пулăшу кассисем валли государствă социаллă страховани бÿджечĕ тăрăх паракан укçа-тенкĕсенчен 50 процентĕнчен кайа мар уйăрса пама хушнă.

РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççинче

РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççи суйлав кунхине—1938 çулхи ийунĕн 26-мĕшĕнче тăватă сехет ытла, урăхла каласан, 6 сехетрен пуçласа 24 сехете çитиччен, çул çинче пулакан пăссажир пуйăсĕсем çинче пуринче те суйлав участкисем организацилеме кирлĕ тесе йышăннă.

Чукунçул çинчи пысăк станцисенче суйлав кунхине вокзалсенче пулакан транзитлă пăссажирсенчен, çавăн пекех тата суйлав кунхине çул çинчи таварсем илсе çÿрекен пуйăссем çинчи бригадăсенчен бÿллетенсем йышăнма суйлав участкисем организацилеççĕ.

Тĕп Суйлав Комиççи суйлав кунхине çул çинче пыракан пăссажир пăрахучĕ çинче пуринче те суйлав участкисем организацилеме кирлĕ тесе йышăннă.

(ТАСС).

Центрти В. И. Ленин музейĕн икĕ çул хушшинчи ĕçĕ

Майăн 15-мĕшĕнче Мускаври центрти В. И. Ленин музейне уçнăранпа икĕ çул тултарнă. Музейа Сталин йулташ пуçарнипе тунă, ăна Владимир Илйич вилнĕренпе 12 çул тултарнă тĕле уçнă. Музей болшевисăмăн чăн-чăн шкулĕ, анлă массăсем хушшинче ленинисăма пропагандăлас тĕлĕшпе хăватлă хĕçпăшал пулса тăнă.

Çак çулăн пуçламĕшĕнче музейра Владимир Илйичăн уйрăм вăхăтĕнчи пурнăçĕпе ĕçне уççăн кăтартса паракан, Ленинпа Сталин халăх тăшманĕсене хирĕç, пролетарилĕ револуцишĕн, социалисăм çĕнтерессишĕн иккĕшĕ пĕрле кĕрешнине уççăн кăтартакан експонатсене 5.304 пухнă.

Совет Сойузĕнчи ĕççыннисем музей çине калама çук хытăн йуратса пăхаççĕ. Кашни кунах унта 4 пине çити çын кĕрсе курать. Çавăн пекех музейа курма тĕнчери пур çĕршывсенчен те екскурсантсем килнĕ: республикăлă Испанин бойецĕсем, Чехословакинчи, Франциri, Данири, Англири рабочисен делегацисем.

Çак çулăн пуçламĕшĕнчен вара музейа 468.717 çын кĕрсе курнă. Икĕ çул хушшинче музей експоначĕсемпе виçĕ мĕлйуна йахăн çын паллашнă.

(ТАСС).

Коммуниссемпе партире тăманнисен РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнчи Сталинла блокĕ сывă пултăр!

Агитатăрсем суйлавçăсен килĕсене çӳреççĕ

ЙĔПРЕÇ. Йĕпреç йалсоветĕнче суйлав саккунĕсене вĕрентме 48 кружок организациленĕ. Çав кружоксенче 1013 суйлавçă вĕренет.

Хумпуç Патăрйелĕнче суйлав саккунне вĕренмели Руміанцĕв йулташ йертсе пыракан кружокра 28 çын вĕренеççĕ. Руміанцĕв агитатăр вĕсене тĕплĕн вĕрентĕт. Вăл халĕ 4 заңати туса иртерчĕ. Заңатисене план тăрăх, ирттерет. Çак колхозрах 65 çулхи Клементйĕв Куçма та суйлава хатĕрленес ĕçре питĕ те тăрăшса ĕçлет. Вăл Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Йĕпреç суйлав округĕн суйлав комиççи членĕ пулса ĕçлет. Вăл халĕ „Партин 17-мĕш сиесĕ“, „Çĕнĕ пурнăç“ тата Ворошилăв йулташ йачĕпе тăракан колхозсенче суйлава хатĕрленес ĕç мĕнле пынине тĕрĕслеме тухрĕ.

Агитатăр Йеремейĕв лайăх ĕçлеме пуçларĕ. Ăна 10 килри суйлавçăсене суйлав саккунне вĕрентме хушнă. Йеремейĕв хăйне хушнă ĕçе тĕплĕн пурнăçлать. Вăл куллен ех килсем тăрăх çӳресе Сталинла Конституцине суйлав саккунĕсем çинчен ăнлантарать.

— Епĕ ĕлĕк начар пурăннă. Пире чухăнсене суйлав саккунне вĕрентме мар, суйлав хăçан ирттессине те пĕлтермен тата пирĕн суйлама та, суйланма та права пулман. Халĕ епĕр Сталинла Конституци тăрăх суйлама та суйланма та пултаратпăр. Çавăнпа та епĕ хама шанса панă, ответлă та чыслă ĕçе пурнăçлама чĕрерĕн тăрăшатăп, — тет Йеремейĕв йулташ.

Çавнашкалах Мартынăв Йакăв йулташ та тăрăшса ĕçлет. Вăл та 10 килри суйлавçăсене вĕрентет. Мартынăв йулташ суйлав Положенисене вĕрентнисĕр пуçне тата „Колхозниксене колхозран кăларма чарасси“ çинчен йышăннă постановленине, тĕнчери лару-тăрусем çинчен те колхозниксене тĕплĕн ăнлантарать. Вăл халĕ, тĕнчери лару-тăрусем çинчен ăнлантарассипе 3 хутчен заңатисем ирттерчĕ.

Халăха суйлав саккунĕсене вĕрентесси хисеплĕ те ответлă ĕç. епĕ хам участкăри пур суйлавçăсене те, суйлав тĕлне суйлав саккунне лайăх пĕлекен туса çитерессишĕн тăрăшатăп. Манăн задачă çавнашкал, — тет агитатăр Мартынăв йулташ.

Шурдăвă йулташ та начар ĕçлемест. 10 килти суйлавçăсене кашни кунах кайса вĕрентсе çӳрет. Суйлавçăсене ĕлĕкхи йăвăр пурнăç çинчен, халхи тулли правалă ирĕклĕ пурнăç çинчен ăнлантарать.

Хумпуç Патăрйелĕнчи çураки вăхăтĕнче ĕçленĕ вулавçăсем халĕ уйсенче ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсене суйлав саккунĕсене вĕрентессипе тăрăшса ĕçлеççĕ. Уйрăмах Çтепанăв, Игнатйева, Куçмин, Васильйĕв, Илларионăв йулташсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем кашни кунах уйа тухса суйлав саккунĕ çинчен колхозниксене ăнлантараççĕ. Вĕсем пĕр-пĕрнипе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Г. Марушĕв.

Суйлава савăнăçлăн кĕтсе илетпĕр

Трак-районĕнчи Тусай йалĕнче Октăбĕр революциччен çырава пĕлекенсем пурĕ те 2 çын анчах пулнă. Совет власĕ пулнă хыççăн, 21 çул хушшинче Тусай йалĕ тĕпренех улшăнчĕ. Халĕ Тусайра çырăва пĕлменнисем çукпа пĕрех. Тусай хресченĕсенчен 2 çын аслă инженер, 12 çын учитĕл пулса ĕçлеççĕ. 24 çамрăк кĕçĕн вăтам шкулсенче тата 4 çын техникумсенче вĕренеççĕ. Йалхуçалăх кадрсене те чылай вĕрентсе хатĕрленĕ. Халĕ 4 çын тракторисра, 2 çын фельдшĕрта ĕçлеççĕ.

Тусай йалĕнче суйлав Положенисене вĕренес тĕлĕшпе 7 кружок ĕçлет. Колхозниксем суйлава савăнăçлăн, ĕçре çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илеççĕ. Агитатăрсем суйлав Положенисемпе Конституцисем çинчен вĕрентнĕ чухне Тусай йалĕ тата пĕтĕм Совет Сойузĕ пысăк ӳсĕм тунипе тĕплĕн паллаштараççĕ.

1930 çулта „Четай“ колхоз организациленĕ. Колхоз çудран çул пуйанланса пырать. Колхозăн тĕрлĕ йалхуçалăх машинисем тата автомашинă пур. Çитес çулсенчех „Четай“ колхозра Илйич ламписем çуталаççĕ. Халĕ Сурăм шыв çинче пысăк плотина тăваççĕ.

Пуйан та культурлă пурнăçпа пурăнаççĕ колхозниксем. Вĕсен велосипедсем, патефонсем, хут купăссем, нумайĕшĕн çĕвĕ çĕлемели машинасем, сăмаварсем пур. Йалăн сăн-сăпачĕ те пĕтĕмпех улшăнчĕ. Йалта шкул, кооператив, ветпункт пур. Çак çитĕнӳсемпе „Четай“ колхоз членĕсем савăнаççĕ.

Пуйан та культурлă пурнăç туса панăшăн Сталин йулташа чĕререн пысăк тав тăватпăр. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче тăван çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн сасăлатпăр“, теççĕ колхозниксем.

Ник. Петров.

Суйлав положенийĕсем çинчен ăнлантарать

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Вăрман хуçалăхĕн Кăмаша участкинчи 7-мĕш кварталта йĕкел лартакансем ĕçлеççĕ. Йĕкел лартакансене кашни кун кăнтăрлахи кану вăхăчĕсенче Кивĕ Анаткассинчи вулав çурт пуçлăхĕ Иван Арсенкин йулташ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕрентет.

К. Борисăв.

Агитаци ĕçне хуçалăх ĕçĕсемпе çыхăнтармала

Иртнĕ çулта, октăбĕр уйăхне çитиччен, Хĕрлĕ Чутай районĕнче агитацилĕ-массăлă ĕçе организацилесси çине çителĕклĕ çаврăнса пăхман, çакна пула районта политикăлă агитаци ĕçĕ питĕ начар пулнă. Агитатăрсем кăштах пулнă, анчах вĕсем хăйсем тĕллĕн ĕçленĕ, агитатăрсене парти райкомĕ йертсе пыман.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавĕ кампанийĕ парти райкомĕ умнĕ политикăлă агитаци ĕçне вăйлатас задача кăларса тăратрĕ. Çак задача пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе райком 39 агитколлектив турĕ, кашни суйлав участкинче пĕр агитколлектив пулнă.

Агитколлективсенче агитатăрсем пурĕ 556 çын ĕçленĕ. Агитколлективсем тунипех ĕç пĕтмест-ха. Вĕсене йертсе пымала, ĕçре пулăшмала. Çавăнпа та парти райкомĕ агитколлективсемпе уйрăм агитатăрсене пулăшма хăйĕн агитатăрĕсене уйăрчĕ. Парти райкомĕ уйăрнă агитатăрсем кашни уйăхрах вицшер хут вырăнта ĕçлекен агитатăрсене пухса çеминарсем туса ирттернĕ. Вĕсене пуринчен ытла Совет Сойузĕнче тата тĕнчери çĕршывсенче пулса иртекен уйрăм ĕçсем çинчен ăнлантарса панă. Мĕншĕн тесен, вырăнти агитатăрсем хăйсен куллевхи ĕçĕсенче часах ăнланман ыйтусемпе тĕл пулаççĕ.

Агитатăрсен политикăлă пĕлӳне ӳстерес тĕлĕшпе районти агитатăрсен курсĕнче — 128 çын, районсем хушшинчи курсра — 36 çын тата тĕне хирĕçле курсран — 22 çын вĕрентсе кăларнă.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавне хатĕрленсе ирттернĕ вăхăтра районра докладсем, калаçусем, ыйтусемпе ответсен вечĕрĕсем, пухусем, митингсем нумай туса ирттернĕ. Çав пухусемпе митингсенче, калаçусенче партири тата партире тăман большевиксем — агитатăрсем коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ тăратнă кандидатсемшĕн агитациленĕ. Агитацилĕ ĕç чи малтан суйлавçăсене ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйламали Положенипе Сталинла Конституцине вĕрентес йĕнĕпе пулса пынă. Большевикла агитацине анлăн сарнă май, районти суйлавçăсенчен 99,4 проценчĕ суйлава хутшăннă.

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлав кампанийĕнче тунă ĕçсемпе лăпланса, епĕр агитколлективсене йертсе пырассине чылай вăйсăрлатнă. Агитатăрсене çухатса пĕтернисем те пулнă. Сăмахран, Ижекей йалсоветĕнче иртнĕ суйлав кампани вăхăтĕнче агитатăрсем 19 çын ĕçленĕ, халĕ 13 çын çеç тăрса йулнă.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленнĕ май парти райкомĕ политикăла агитаци ĕçне йĕркелеме тытăнчĕ. Майăн 1-мĕшĕ тĕлне 543 агитатăр ĕçе активлăн тытăнчĕ, районта РСФСР тата ЧАССР Конституцийĕсемпе суйлав Положенисене вĕрентекен кружоксем 365 организациленĕ, вĕсенче 10 пин çын ытла вĕренет.

Агитатăрсенчен Судеркин, М. Заринăв, Антипăв, Скворцов, Черносăв йулташсен ĕçĕсене палăртмала. Судеркин йулташ кружок заңатине питĕ йĕркелĕ туса ирттерет, колхозниксене хаçатсем çинчи çĕнĕ хыпарсене вуласа парать. Антипăв (Хватукасси), М. Заринăв (Чапайĕв йачĕпе тăракан колхоз), Черносăв („Лоба“ колхоз) йулташсем политикăла агитаци ĕçне хуçалăх ĕçĕсемпе çыхăнтараççĕ. „Лоба“ колхоз членĕсем Черносăв йулташа суйлав комиççи членне суйларĕç.

Пирĕн район государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене тултарассипе кайа йулать. РСФСР тата ЧАССР суйлав кампани вăхăтĕнче большевикла агитаци ĕçне анлăн сарни суйлава лайăх ирттерме, хуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă пурнăçа кĕртме пулăшмала.

Партин Хĕрлĕ Чутай райком çекретарĕ ТОЛСТОВ.

Агитатăрсен пухăвĕ

СЕНТĔРВАРРИ. Суйлава хатĕрленес ĕç мĕнле пынине сӳтсе йавас майпа, Ĕçмĕлти парткабинет çумĕнчи агитатăрсен пухăвĕ пулчĕ. Пухăва 24 агитатăр пынă. Ĕçмĕлти парткабинет пуçлăхĕ Руденкă тата Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Ĕçмĕл суйлав округ комиççи çекретарĕ Вишневский йулташсем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе агитатăрсен мĕнле ĕçлемели çинчен каласа ăнлантарчĕç.

„Хурçă“ колхозри агитатăр Перцĕв йулташ агитатăрсен курсĕнчен вĕренсе тухсанах колхозниксене суйлав саккунĕсем çинчен вĕрентес ĕçе тытăннă. Вăл тăрăшса ĕçлет, колхозри пĕтĕм суйлавçăсене кружоксенче вĕренме хутшăнтарнă.

„Ударник“ колхозра агитатăр А. Куçминский йулташ йертсе пыракан кружок аван ĕçлет. Кружок заңатийĕсене колхозниксем пурте хавасланса пухăнаççĕ. Колхозницăсем пахчасенче, уйсенче ĕçленĕ çĕре тухса вăл çĕнĕ хаçатсем вуласа парать, тĕнчери лару-тăрусем çинчен калаçусем ирттерет.

Ĕçмĕл пульницинчи Иванова йулташ пульницăра ĕçлекенсене суйлав саккунĕ çинчен вĕрентнĕ чухне картăсемпе, клобуспа тата схемăсемпе усă курать.

Пухура халăха суйлав саккунĕсем çинчен вĕрентес ĕçе чылай агитатăрсем ку таранчен те тытăнманнине палăртса хăварчĕç. Сăмахран Малти Пукашри Кудрйашова агитатăр курсран вĕренсе тухнăранпа та суйлав саккунĕсене вĕрентме пуçăнман. Çакăн пекех Ӳтаçкасси, Иккĕмĕш Чураш, Шупашкар Ĕçмĕл, Малти Пукаш йалĕсенчи агитатăрсем агитацилĕ ĕçе çителĕклĕ туса пыманнине палăртса хăварчĕç.

Г. Аршинăв.

Совет Сойузĕн хулисем

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Куйбышĕв хулинчи шыв вăксалĕн сквери.

Г. Л. Аун фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Китайăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешекен çар

Китайăн çурçĕр пайĕнче, Шаңси, Хебей, Чахар провинцисен пысăк районĕсенче, Йапони интервенчĕсен тылĕнче, халăхăн революцилĕ 8-мĕш çарĕн чаçĕсем, нумай пилĕ партизансен отрйачĕçемпе пĕрле, тăшмана туйса илмеллех çапаççĕ. Чăннипех массăлă, чăннипех халăх çарĕ — 8-мĕш çар Йапониң империалисĕсенчен Китайăн тăван хулисене, тăван йалĕсене, районĕсене туртса илет. Хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн, никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешекен хĕçпăшаллă халăх мĕн тума пултарнине вăл витĕмлĕн кăтартать.

Çак çар халхи вăхăтра питĕ чаплă ĕçсем тăвать. Вăл нихăçан манми чаплă тухрĕ. Анчах унăн иртнĕ кунçулĕсем те кунтан чапсăр мар, унăн иртнĕ кунçулĕсем те тĕлĕнмеле. Вăл 1937 çулăн иккĕмĕш çурçулĕччен Китай Хĕрлĕ Çарĕн паттăр йачĕне тăнă. Хăйне организациленĕрен вара 11 çул хушшинче вăл Китай халăхĕн интерĕсĕсемшĕн кĕрешес вăрăм çула утса тухнă. Коммунисла парти йертсе пынипе, граждăн вăрçи пынă 10 çул хушшинче вăл хăватлă тăшмансемпĕн хăруша вăй пулса тăчĕ. Унăн йалавĕ пысăк çĕнтерӳсемпе çуталса вĕлкĕшет. Вăл нумай походсем туса ирттернĕ. Çак походсенчен чи палăраххи хĕвеланăçĕнчи поход пулать. Унчухне Хĕрлĕ Çар тăшманăн тимĕр ункипе татса кăнтăрталан Цзйанси провинцийĕн çурçĕрĕ Шаңси провинцине, Китай территорин пайне вăйпа туртса илнĕ тăшмана сывăх районă кайнă.

Çав поход Китай Хĕрлĕ Çарĕ çапăçма пултарнине, ăна никам та çĕнтерме пултарас çуккине пĕтĕм тĕнчене кăтартнă. Çав поход çинчен политикăлă литератусен государствă издательстви нумай пулмасăт кăларнă. Ђан, Йен тата Йан Дун-хуа — Китайăн икĕ интеллигентчĕ — Китай Хĕрлĕ Çарĕн хĕвеланăçĕнчи походĕ пирки кĕнекере çутатса панă. Çак икĕ интеллигента — врачпа радиста Китай Хĕрлĕ Çарĕ тыткăна илнĕ пулнă, кайран вĕсем иккĕшĕ те Хĕрлĕ Çар ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйхала хурса кĕрешекен боецсем пулса тăнă.

Пысăках мар кĕнекере халăхăн революцилĕ 8-мĕш çарĕн боецĕсем Йапони захватчикĕсене хирĕç паттăрăн, çине тăрса кĕрешнине лайăх кăтартса панă.

Кĕнеке паттăр тапхăра çутатнинчен пуçланать. Çак паттăр тапхăр 1934 çулти октăбĕр уйăхĕн варринче пуçланнă. Автăрсем çырнă пек, унчухне Хĕрлĕ Çар противникăн ункинчен вĕçерĕнсе хĕвеланăçнеле кайнă... Цзуңи уйесĕнче Гуйчжоу провинци çурçĕр йенче 12 кун, Хойли уйесĕнче 5 кун каннисĕр пуçне, çар кăнтăрла та, каçхине те, çанталăк начар тата çăмăрлă пулнă чухне те, ниçта чарăнмасăр малала кайнă. Вăл Хуңаң, Гуандун, Гуанси, Гуйчжоу урлă каçса Сычуани провинцин кăнтăр йенне кайнă, унтан Йуңаңе. Сикане çитнĕ, унтан каллех Сычуане кайнă, Лифаң тата Суңаң уйесĕсем патне тухнă. Хĕрлĕ Çар Йанзцы йуханшывĕн кăнтăр йенчен пуçласа пĕтĕм çĕршыв тăрăх утса тухнă.

Сакăр уйăх хушшинче 12 пин ли (ли 0,5 километр) утса тухнă. Çӳлĕ сăртсемпе пысăк йуханшывсем урлă каçсан, çарăн тĕп вăйĕсем Çуй Сан-Цаң чаçĕсемпе пĕрлешнĕ. Походăн çак пайĕнче 130–140 пин çын хутшăннă. Коммунисла партин руководителĕсем пурте, унăн вырăнти организацийĕсенче ĕçлекенсем 10 пин çын, Китайăн совет районĕсенче ĕçлекенсем пурте Хĕрлĕ Çарпа пĕрле кайнă. Çар составĕнче 100–200 çынтан тăракан хĕрарăмсен отрйачĕ пулнă. Хĕрарăм боецсем пиçĕххи хушшинче революцивĕр йăтса пынă, вĕсем хастарлă пулнă, чирлĕнĕ боецсене тăрăшса пăхнă, суранланнисене çапăçу пулнă вырăнтан йăтса илсе тухнă.

1935 çулти июнĕн 15-мĕшĕнче аслă походăн малтанхи тапхăрне вĕçлесе, Хĕрлĕ Çар хĕлле вунă пин çынтан тăракан отрйад уйăрать, Мао Цзе-дун йертсе пынипе çак отрйада Сиканран, Гаңсу урлă, Китай çĕршывĕн çурçĕр пайĕнче унчухне хăйĕн наступленине вăйлатса пыракан Йапони çарне хирĕç Шаңсине йанă. Кайарах, çак отрйад хăйĕн ĕçне ăнăçлă вĕçлесен, Хĕрлĕ Çарăн çурçĕрти хăватлă группине тусан, Хĕрлĕ Çарăн ытти чаçĕсем те кунта куçнă.

Çурçĕр провинцисене Китай Хĕрлĕ Çарĕ пысăк вăй хунипе çеç çитнĕ.

Хĕрлĕ Çарăн çулне шуррисем картланă. Вĕсем, шуррисем, çулсем çинче укрепленисем тунă, кĕперсене сĕмĕрнĕ, засатăсем тунă, йалсене, продоволствине тата выђăх апачĕсен склачĕсене вут тĕртсе çунтарнă. Çарăн полкисене хуласем çине штурмлама, тăвăллă йуханшывсем урлă каçмалисене çапăçса илме, противникрен туртса илнĕ хĕçпăшалпа хĕçпăшалланма, тăшманран туртса илнĕ продоволствипе тăранса пурăнма тивнĕ.

Уцзйан, Чаңуйхе, Цзиңша, Дадухе йуханшывĕсем урлă хăйулăн каçнисене нихăçан та манас çук.

Уцзйан йуханшывĕ патне çапăçса пынă, противник вĕçи-хĕррисĕр пăшалпа, тупăпа, пулеметпа пенĕ вăхăтра красноармейĕçсем шыв урлă каçмали кĕпер тунă, çак кĕпер тăрăх йуханшыв урлă каçнă Хĕрлĕ Çарăн командованийĕ тăшман çарĕн хыçне йумахри пек паттăр боецсен полкне йанă. Çав полк Хоу генералăн çарне çапса аркатнă.

Аңшуңчан йатлă вырăнти районра пăшалпа, револьвĕрпа, алăпа ывăтмали гранатпа, пулеметпа хĕçпăшалланнă комсомолĕçсемпе коммуниссем икĕ кимĕ çине ларса, Ђу Веңь Хо генералăн çарĕсем пăшалпа пенине пăхмасăр, Дадухе йуханшывĕн çурçĕр йенчи сыранне каçнă, унта çирĕпленсе тăнă, çар çине, атака тунă. Çавăнта тăракан çар чаçĕнне хĕçпăшалĕсене туртса илнĕ. Ђу çарĕсем кайала чакнă.

Кĕнеке автăрĕсем, кĕнекен кашни страницинчех боецсемпе командирсен паттăрлăхĕ, хăватлăхĕ, хăйсене хăйсем хĕрхĕнменни çинчен каласа параççĕ.

Империалиссен çарĕсем пур йенчен те хупăрласа илнĕ Хĕрлĕ Çар 11 провинци урлă каçнă, 26 пин километр çул тăрăх утса тухнă. Çĕршывăн чи çӳлĕ тăвĕсем, йуханшывĕсем, пуш хирсем, шурлăхсем, сĕм вăрмансем кайа йулнă. Çуклăха, чылай йăварлăхсем тӳссе, Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем кашни утăмрах хăйĕнчен лайăх хĕçпăшалланнă, хисеп тĕлĕшĕнчен вăйлă çара çĕнтĕрсе пынă, çар хатĕрĕсене нумай туртса илнĕ.

Боецсем хăйулă, маттур тата хăравçăсăр. Вĕсен çулпуçĕсемпе командирĕсем талантлă, коммунисла партин пĕтĕм ĕçне парăннă.

Нимĕн мухтамасăр, кĕнеке автăрĕсем Чжу Де, Мао Цзе-дун сăнĕсене, вуншар командирсен, красноармейĕçсен, хĕрарăм боецсен сăнĕсене йар уççăн, йăланах асра пулмала çутатса параççĕ.

Акă вăл 50 çула çитнĕ, чăн-чăн çар çынни, Чжу Де. Вăл простă çар тумтирне тăхăннă. Çарăн главнокомандуйушчине урăх нимĕн те уйăрса палăртса тăмаст. Вăл простой çын, боецсемпе пĕрле. Вăл нумай, час-часах талăкĕпех ĕçлет, оперативлă плансем тăвать, тӳрех вăрçă сывăхĕнчи районсене пырса çӳрет, красноармейĕçсемпе пĕрле хăйĕн хулпуççи çинче тулă кĕлти йăтать, вĕсемпе пĕрле авăн çапать, тырăсене уйхиртен лагĕре йăтать, çамрăк боецсене савăнăçлăн хавхалантарать.

Хĕрлĕ Çар çул пуçĕ Гуңдура пурăнакан мусулмансен руководителĕсемпе хăй калаçать, наци ыйтăвне тĕрĕс татса панин примерне кăтартать.

Халиччен йалăнах китайĕçсене курайман мусулмансем, тепĕр кунне Хĕрлĕ Çара савăнăçлăн ăсатса йарас ĕçе организацилеççĕ. Йуңаңри мусулмансем вуншарăн Хĕрлĕ Çар составне кĕреççĕ, Хĕрлĕ Çар составĕнче мусулмансен уйрăм отрйадне тунă. Кĕнекен кашни страници хыççăн, Чжу-Де пысăк стратег тата тактик пулни ытларахăн та ытларах уççăн курăнса пырать.

Хĕрлĕ Çарăн тепĕр çулпуçĕн сăн-сăпачĕ — Мао Цзе-дун сăн-сăпачĕ те тĕлĕнмеле, ĕмĕр манми пример. Лайăх коммунис, çар ĕçне лайăх пĕлекен çын, Мао, Чжу-Де пекех, тава тивĕçлĕ авторитетпа усă курать. Вĕсем йертсе пынипе Хĕрлĕ Çар маневăрсем туса, тăшман çине кĕтмен çĕртен наступлени туса, тăшман çарĕсене аркатса пырса, хĕвеланăçĕнчи аслă похода ăнăçлă ирттернĕ. Çак походра, унăн ăнăçăвĕнче — Хĕрлĕ Çарăн паллă уйрăмлăхĕсем йар уççăн курăнса тăнă. Хĕрлĕ Çар хуласемпе йалсене чухăнсене вăђђи хӳтлĕх тата пулăшу илсе пынă. Хĕрлĕ Çар халăх умĕнче хăйсен пĕрлешӳлĕхне, хурçă пек çирĕп дисциплинине, кăтартса панă, ĕççынисем Хĕрлĕ Çар лозунгĕсемпе задачисене чĕререн йышăнса илнĕ.

Поход вăхăтĕнче халăх пур çĕрте те Хĕрлĕ Çара пулăшнă. Йалсемпе местечкăсенче унăн полкисемпе корпусĕсене хресченсемпе рабочисем вуншар, çĕршер çын кĕнĕ. Хĕрлисем кайнă çулсем çинче арçынсемпе хĕрарăмсен ушкăнĕсем тăнă, вĕсем красноармейĕçсене савăнса саламланă. Час-часах агитатăрсемпе пропагандиссем малта пынă, Вĕсем отрйадсене вăрттăн организациленĕ, Хĕрлĕ Çар çитсен вĕсемпе пĕрлешнĕ. Ичжане малтанах килнĕ командирпа политкомиссар-коммуниссем вăрттăн вĕрентсе хатĕрленĕ 400 рабочи пурте Хĕрлĕ Çарпа пĕрлешнĕ.

Бице, Çуаңвей, Дунчуаң районĕсенче пĕр харăсах Хĕрлĕ Çар ретне добровольцсем 6 пин çын кĕнĕ. Вĕсене Лио Бин хой малтанах çар ĕçне вĕрентсе хатĕрленĕ.

Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсем — Китай халăхĕн тăван ывăлĕсем вăрçăра маттурлăх, хăйсем нимĕнрен хăраманнине кăтартнă. Пĕррехинче, Лацзычоу поçолки патне çитнĕ чухне, ту çинчен анмали хĕсĕк çула шуррисенчен нийепле те часах тасатма май килмен. Йулашкинчен вара „...çĕрле çурçĕрте 17 маттур боец Чен йертсе пынипе йăвăçпа усă курса противникăн кус умĕнчех ту çине хăпарса кайнă, кун хыççăн тăвăн сылтăм йенчи тайăмĕпе тăшман тылне кĕрсе кайнă, алăпа пемели гранатсемпе хĕçпăшалланнă боецсем противникăн заставĕ çине кĕтмен çĕртен тапăннă. Ту урлă каçса каймали хĕсĕк çул красноармейĕçсен аллине лекнĕ. Тăшмансем нимĕн тума пĕлмесĕр нимĕн йĕркесĕр кайала чакнă. Хĕрлĕ Çар Лацзычоуна хăй аллине çавăрса илнĕ...“.

„Ĕç питĕ йăвăр вăхăтра, халăх ĕçĕшĕн хăйне шелемен çынсем кирлĕ чухне, нимĕнрен хăраман çынсем çĕршерĕн çав хисеплĕ ĕçе хăйсем çине илесшĕн кашни хутах пĕр-пĕрнипе тавлашаççĕ“, — тесе çыраççĕ, хăйсен вывăдне нумай примерсемпе çирĕплетеççĕ автăрсем.

Хăйĕн тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕшĕн, унăн никама пăхăнса тăманлăхĕшĕн çапăçма никам та хăйĕн пурнăçне хĕрхенмен.

Çирĕп, нимĕн хăраман, хăйĕн тăван çĕршывне чĕререн йуратакан боецсем вĕрентсе çитĕнтерес ĕçре Хĕрлĕ Çарта агитацине пропагандă тата вĕрентӳ ĕçне организациленни питĕ пысăк вырăнта тăнă. Çарта çынсем йăлтах урăхланнă. Чжу Де арăмĕ, ĕлĕк хутла пĕлмен ĕçхĕрарăмĕ, Хĕрлĕ Çарта пулса 1933 çулта шкулран вĕренсе тухнă, кун хыççăн çар академинче вĕренсе пĕтернĕ. Хĕвеланăç походĕнче вăл хăй çар ĕçне тата политикăна лайăх пĕлекен çын пулнине кăтартнă.

Çапăçура вĕрентсе çитĕнтернĕ, кĕрешӳре пиçнĕ çынсем пинăшерĕн.

* * *

Малтанах коммунисла парти çине шанман автăрсене аслă поход çакна ĕнентернĕ: „Хĕрлĕ Çар, Нанкин çарĕ, Китайри ытти генералсен çарĕсем хăйсен хĕçпăшалне Китай халăхĕн тăшманне — Йапонине хирĕç тăратсан, епĕр Йапони милитарисĕсене Китайран кăларса сирпĕтнĕ пулăттăмăр“, — теççĕ вĕсем.

Халĕ Китайра Йапонине хирĕçле нацилĕ пĕрлĕх фрончĕ тунă. Китайăн пĕрлĕхлĕ çарне тунă. Китай çĕршывĕн вăрçăра çапăçас пултарулăхĕ ӳсет. Çавăн çине тайăнса, Йапоние хирĕçле фронта çирĕплетсе, Китайа демократизацилесси çине çарса, Китай халăхĕ çĕнтерет.

Н. Петров.

1938 ҫулхи ҫураки

Ҫĕрулми лартса пĕтерчĕҫ

Ҫĕнĕ Пинерти (Шăхасан районĕ) „Пинер" колхоз ҫураки вăхăтĕнче 188 гектар ытларах тĕштырăсем акса хăварчĕ. Колхозăн икĕ ҫейăлкипе пĕр чарăнмасăр вирĕ сменăпа ĕҫлерĕҫ. Вĕсемпе пурĕ 125 гектар акнă. Ҫейăлкăпа ĕҫлекенсем П. Трофимăв, М. Денисăв, В. Саватникăв, Д. Демйанăв колхозниксем ĕҫ нормисене 180 процентран пуҫласа 210 процента ҫитиччен тултарса пычĕҫ. Сӳрелекенсем тата сухалакансем те хăйсен нормисене йаланах тултарса пычĕҫ.

„Пинер" колхозникĕсем кăҫал вăтам шутпа кашни гектартан 100 пăтран кайа мар тĕштырă тума задачă лартнă. Ҫакна пурнăҫлас тесе вĕсем агротехникăла ĕҫсене аван туса пычĕҫ. Ҫӳркунне, йур ирĕлсе пĕтсенех, кĕрхи калчасене пĕр хутчен апат панă тата сӳреленĕ. 50 гектар ҫинче йаровизациленĕ вăрлăхпа акнă. Ҫуртри акнă лаптăксене ҫурри патне кивĕ улăмпа витсе мульчировани тунă.

Колхоз ҫĕрулмине те лартса пĕтерчĕ. 40 центнĕр ҫĕрулмине йаровизацилесе лартнă. Хаљ уйрăм бригадăсем ирхи ҫĕртме сухине сухалаҫҫĕ, кавтăр акма хатĕрленеҫҫĕ.

В. Лукин.

Выставкă експоначĕсене лайăх пăхса усраҫҫĕ

Тренйелĕнчи (Патăрйел р.) „Октабĕр йалавĕ" колхоз пĕлтĕр вăтам шутпа кашни гектартан 19 центнĕр тĕштырă, уйрăм участкăсенче 25 центнĕр таран туса илнĕ. Ĕҫкунĕ тăрах 9-шар килограм тĕштырă валеҫсе панă. Уйрăм колхозниксем 600-шер пăт тырă илчĕҫ. Иртнĕ ҫулта вăйлă тырпул туса илнипе „Октабĕр йалавĕ" колхоз Пĕтĕм Сойузри Йалхуҫалăх выставкинче пулма тивĕҫлĕх илчĕ. Колхоза выставкăра пулма ҫирĕплетни колхозниксене савăнтарать, ҫавăн пекех малашне вăйлăн ĕҫлеме хушать.

Колхозниксем пур ĕҫе те выставкăна хатĕрленес ыйтупа ҫыхăнтарса пыраҫҫĕ. Ҫуракине кĕске вăхăтрах пысăк пахалăхпа иртерчĕҫ, пĕр-перинпе ăмăртса ĕҫлерĕҫ.

„Октабĕр йалавĕ" колхоз членĕсем выставкăна хатĕрленнĕ майă калчасене лайăх пăхса ситĕнтерме, вĕсене ҫум курăксенчен тасатса тăма пулчĕҫ.

Колхозра иртнĕ ҫулта пухнă тĕштырăсен експоначĕсене лайăх пăхса усраҫҫĕ. Ку тĕлĕшпе колхозра йатарласа уйăрнă ҫын ĕҫлет.

Н. Квасăв.

Выљăхсене чуптарас ĕҫ

** Ҫĕрпӳ районĕнчи „Радио" колхозра йышлă выљăх-чĕрлĕхшĕн начар тăрăшаҫҫĕ. Колхоз иртнĕ ҫулта та государствă панă плана тултарман. Кăҫал та ҫавăн пек хăрушлăх пур. Кăҫал панă план тăрăх СТФ-ра 20 пуҫ сысна пулмала пулсан, пайанхи куна 18 пуҫ ҫеҫ шутланать. Кунта выљăх-чĕрлĕхсене чуптарса хăварас ĕҫ хăй тĕлĕн пулса пырасса ҫеҫ шанаҫҫĕ, выљăхсене чуптарса хăварас тĕлĕшпе пайан кунччен нимĕн те туман.

К. Савелĕв.

** Вăрман Йĕнĕшри „Свобода" колхозăн (Шăхасан р.) кăҫал мĕн пурĕ 22 кĕсре чуптарса хăвармала. Вĕсенчен пайанхи куна 15 кĕсре чуптарса хăварнă ĕнтĕ. Кĕсресене чуптарас тĕлĕшпе колхозра аслă коњух С. Куҫмин тăрăшса ĕҫлет.

Суртрисем аван шăтса тухрĕҫ

Улăх Шăматри (Йетĕрне р.) „Колхозник йулташĕ" колхоз акă ĕҫне лайăх пахалăхпа вĕҫлерĕ. Колхозниксем вăйлă тырпул туса илессишĕн тăрăшса ĕҫлерĕҫ. Ҫураки вăхăтĕнче стахановла ĕҫлекенсене те палăртса хăвармала. С Григорйĕв, А. Григорйĕв, В. Волкăв, К. Игнатйĕв, М. Куҫмин йулташсем нормăсене кулленех ытлашшипех тултарса пычĕҫ. Ҫавăн пекех вĕсем ытти колхозниксене ĕҫре пулăшса пычĕҫ.

Хаљ малтан акнă тырăсем тикĕс, лайăх шăтса тухрĕҫ.

С. Рйабиновский.

Колхозри йаслĕ

Йĕпреҫ районĕнчи „Хĕрлĕ фронтовик" колхоз йатарласа ача йаҫли валљи ҫурт лартрĕ. Йаҫлĕ майăн 4-мĕшĕнче ĕҫлеме тытăнчĕ. Йаҫлĕре ĕҫлекен С. Петровă, А. Ҫпиридонăв йулташсем ачасене лайăх пăхаҫҫĕ.

А. Павлăв.

Пуху кăтартăвне пурнăҫа кĕртессишĕн

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул строительстви ҫумĕнчи парткомăн майăн 10—11-мĕшĕнче отчотпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура пулнă 30 коммунисран 21-шĕ тухса калаҫрĕҫ.

Тухса калаҫакансем пурте пекех парти вĕренĕвне йапăх организацилени ҫинчен чарăнса тăчĕҫ. Хăшпĕр коммуниссене кружоксене йавăҫтарман. Парти активне вĕрентме парти историне вĕренмелли кружок организациленĕ пулнă, анчах 4 уйăх хушшинче те ҫак кружокра пĕр занятие кăна иртернĕ.

— Партком ҫекретарĕ пулнă Карпăв нихҫан та кам мĕнле вĕреннине пĕлесшĕн тăрăшман. Вăл вĕренӳ ҫинчен ыйтса пĕлсе пулăшу парас вырăнне час-часах манран:—Есĕ мĕнле кунта Украинăран килме пултарнă?—тесе ыйтаччĕ,—тет Пресич йулташ. Партком ҫекретарĕ Никитин та парти вĕренĕвепе сахал ĕҫлет. Вăл хăй те темиҫе хутчен коммуниссене вĕреннĕ ҫĕртен чĕнсе илсе, вĕренӳре чăрмантарнă.

Парторганизаци чукунҫул строительствине те ҫителĕклĕ йертсе пыман. Участкăсенчи коммуниссене—руководительсене пулăшман, вĕсен ĕҫне тĕрĕслемен тата пухусенче те сӳтсе йавман. Ҫак сăлтавран нумай килет те ĕнтĕ чукунҫул строительстви кайа йулни.

Партком ĕҫе организацилесе тата производствăлă канашлусем иртерес ыйтусене тивĕҫлĕ вырăна хуман. Пуринчен ытла кунта рабочисене пурнăҫ условисем туса парса, строительствăра рабочисене йаланлăха ҫирĕплетессипе пачах ĕҫлемеҫҫĕ.

Агитаци ĕҫе те тивĕҫлĕ вырăнта мар. ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă вăхăтра агитаци ĕҫĕ лайăх пулнă, анчах ун хыҫҫăн нимĕн те ĕҫлемен. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама тимлĕн хатĕрленмеҫҫĕ. Агитаторсене нумайĕшне пулăшу кирлĕ пулсан та, вĕсемпе ҫеминарсем иртермеҫҫĕ.

Строительствăра 62 стахановеҫ, 264 ударник шутланать, анчах партком вĕсен хушшинче сахал ĕҫлет. Ҫавăнпа та ĕнтĕ отчотпа суйлав вăхăчĕ тĕлне парти тата сочувствуйушчисен ĕретне пĕр ҫынна та илмен.

Партком отчочĕпе тухса калаҫакансем парторганизаци ĕҫри ҫитменлĕхсене критиклени пĕрлех, малашнехи вăхăтра туса пымалли ыйтусем тĕлĕшпе татăклă кăтартусем пачĕҫ. Партком политикăлă-массăлă ĕҫе тата парти ĕҫне вăхăтра туса пырассине, чукунҫул управленинче йединоначалине ҫирĕп пурнăҫлассине тата сăтарла ĕҫсен йулашкийĕсене хăвартрах пĕтерессишĕн ҫинчен астутарса хăварчĕҫ.

Ҫавнашкалах строительствăна ПСК(б)П хула комитечĕ ҫителĕклĕ ĕҫре йертсе пынине те кăтартрĕҫ. Хула комитечĕн инструкторĕ Депутатов йулташ строительствăра мĕн пурĕ те икĕ хут кăна пулнă.

Партком ĕҫне пур енчен те тишкĕрсе, тухнă хыҫҫăн, унăн ĕҫне ҫителĕксĕр тесе йышăнса хăварнă. Ҫавах та партком ҫекретарĕ Никитин йулташ хăйĕн ĕҫри ҫитменлĕхсене бољшевикла йышăннине кура, коммуниссем партком ҫекретарне Никитин йулташах суйласа хăварчĕҫ.

Коммуниссем Никитин йулташ малашне лайăх ĕҫлĕсса шанса тăраҫҫĕ.

Н. Иванов. В. Игнатйĕв.

Рабочи-стахановеҫсем йертсе пырас ĕҫсенче

ҪĔМĔРЛЕ. Ҫак йулашки 3—4 ҫул хушшинче „Бољшевик" савăтра йертсе пырас ĕҫсене чылай ҫĕнĕ ҫынсем килчĕҫ. Вĕсем ĕлĕкрех производствăра ĕҫленĕ рабочи-ударниксемпе стахановеҫсем, ĕҫе йуратса ĕҫлекенсем пулнă.

Иван Горбунов йулташ савăта 1929 ҫулта ĕҫлеме кĕчĕ. Ун чухне унăн нимĕнле специаљнăҫ та пулман. Техникăна тимлĕн вĕренсе пырса, вăл чылай малала кайать, 1934 ҫулта ăна екстракт ĕҫĕнчи чи паллă вырăна — выпăршчика лартаҫҫĕ. Ку ĕҫре вăл хăйĕн пултарулăхне уҫҫăнах кăтартать, екстракт пĕҫерес плана 158 процент тултарса пырать.

Горбунов йулташ хута сахал пĕлнĕ. Савăта килсен ҫеҫ вăл ҫине тăрса вĕренме пуҫланă, йатарласах шкула ҫӳренĕ. Халĕ акă вăл хăй ытти рабочисене вĕрентет. Иртнĕ ҫулта ăна хăйсен бригадинчи рабочисем профорга суйларĕҫ. Ҫак ĕҫе те Горбунов йулташ йĕркелĕн туса пырать. Парти комитечĕ, савăт администрацийĕ хушнă ĕҫсене те лайăх пурнăҫлать.

Иван Филиппăв йулташ та савăтра Горбунов йулташпа пĕр ҫулталах ĕҫлет. Малтанах специаљнăҫ пулман. Кайарахпа слесар пулать. Унтан ăна ҫменă маҫтарне куҫараҫҫĕ. 1937 ҫулта рабочисем ăна хапрăк савăт комитет членне суйларĕҫ. Халĕ председательте ĕҫлет.

Константин Анчикăв, Петр Владимирăв, Константин Пархисенко, Антонина Йевдокимăвă т. ыт. йулташсем хăйсен ĕҫ техникине вĕренсе, квалификацисене хăпартса, квалификациллĕ рабочисем, маҫтăрсем пулма тивĕҫлĕх илчĕҫ. Анчикăвпа Владимирăв йулташсем савăта рабочине килсе кĕнĕ. Кăштах ĕҫлесен савăт дирекцийĕ вĕсене иккĕшне те Мускаври тирсăран техникумне вĕренме йачĕ. Унтан лайăх вĕренсе тухрĕҫ. Хаљхи вăхăтра Владимирăв йулташ методиҫра, Анчикăв йулташ — ҫменă маҫтарĕнче ĕҫлет. Иккĕшĕ те обществăлă ĕҫсенче тăрăшса ĕҫлеҫҫĕ. Анчикăв РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕрентессипе агитатăр пулса ĕҫлет. Ҫавăн пекех Пархисенко йулташ та медникран ҫменă маҫтăрне куҫрĕ. Савăтрах партине кĕнĕ. ССРС Верховнăй Советне суйланă чух участкăри суйлав комиҫҫи председателĕнче ĕҫлерĕ. Хаљхи вăхăтра вăл Мускавра маҫтăрсен курсĕнче вĕренет.

Ответлă вырăнсенче ĕҫлекен ҫĕнĕ ҫынсен опыт нумайах мар пулин те, ĕҫре нихха примерсем кăтартаҫҫĕ. Вĕсем производствăра ĕҫепипĕ, кашниннех вĕсен хастарлăхĕ пысăк. Савăт администрацин ҫак ҫĕнĕ ҫынсене пулăшса пырас ĕҫе вăйлатмала.

Н. Иваницкий.

Техникăла вĕренӳ ҫук ҫĕрте

Шупашкарти „Красный мебельщик" ертел 4 уйăх планне 76 процент кăна тултарнă. Уйрăмăнах ертел феврањ уйăхĕнче начар ĕҫленĕ. Ку уйăхра вăл 30 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларас вырăнне 6.382 пин тенкĕлĕх туса кăларса, плана 21,2 процент ҫеҫ пурнăҫланă.

Ертелĕн ĕҫлемелли материалсем, чĕр таварсем ҫителĕклĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, ĕҫ вăйĕ те ҫитет. Анчах мĕн ҫитмест-ха йĕркелĕн ĕҫлесе пыма. Ертел правлени председателĕ Шарăбрин йулташ ҫапла ответ парать: „рабочисем техникăна вĕренсе ҫитеймен, квалификациллĕ рабочисем сахал", терĕ.

Чăнах та рабочисем техникăна вĕренсе ҫитеймен. Ҫавăн пирки те хăйсен нормисене тултарайманҫҫĕ. Анчах вĕсене вĕрентессипе правлени мĕн тăвать-ха? Нимĕн те! Вăл, рабочисем хăйсемех пурăнакиле ĕҫлеме вĕренсе ҫитеҫҫĕ, тесе шутлать пулас. Ку таринччен те, хатĕрлекен цехсĕр пуҫне, техминимум кружокĕсем организацилемен. Хатĕрлекен цехра та техминимум кружокне март уйăхĕнче кăна организациленĕ. Вăл кружокра та вĕренме ҫӳрекенсем сахал.

Сборăчнăй цех тĕп цех шутланса тăрать. Ку цехра стољарнăй йапаласен пайĕсене тăваҫҫĕ. Анчах техникăна вĕренессине йĕркелемен пирки, сборăчнăй цехра ĕҫлекенсенчен хăшпĕрисем нормăна та тултараймаҫҫĕ. Йанвар уйăхĕнче нормăна тултарайманнисем 16 процент ытларах шутланнă пулсан, апрелте 23 процент ытла шутланать.

Техникăна алла ҫавăрса илнĕ рабочисене те кирлĕ пек условисем туса паман. Ҫавна пула вĕсем хăйсен ĕҫ тухăҫлăхне йаланах, кунран кун ӳстерсе пыма пултараймаҫҫĕ. Стољар Петр Пачичин йулташ кăҫалхи ҫулăн март уйăхĕнче нормăна 270 процент тултарса 970 тенкĕ ĕҫлесе илчĕ. Анчах апрел уйăхĕнче вăл 160 процент кăна тултарнă.

Малтанхи уйăхсенче 200 процент ытла тултарса ĕҫленĕ Вишневский, Коротков т. ыт. йулташсем те апрел уйăхĕнче нормăсене 152 процентран ытла тултараймарĕҫ. Коротков йулташ март уйăхĕнче нормăна 220 процент тултарнă пулсан, апрелте 117 процент кăна тултарнă. Сăлтавĕсем ĕҫе тĕрĕс йĕркелесе йаманнинче. Хăш чухне материал ҫитмест, тепĕр чухне материал йатма хăвăн кайас пулать.

Социалисăмла ăмăрту ĕҫĕ ертелте пачах сӳнсе ларнă темелле. Правлени председателĕнчен пуҫласа маҫтăрсем патне ҫитиех ăмăрту ĕҫне хакламанни курăнать. Цехпа цех хушшинче тунă ăмăрту договăрĕсене тĕрĕслемеҫҫĕ. Уйрăм рабочисене пĕрне те ăмăртăва йавăҫтарман.

Ертелĕн плана тултарса ĕҫлеме пур условисем те пур. Йĕркелеме, организацилеме пĕлни ҫеҫ кирлĕ.

Х. Л.

ӲКЕРЧĔК ҪИНЧЕ: Ишлей районĕнчи „Приморская коммуна" колхозра сĕлĕ акнине кăтартнă.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Хамăр тăван ҫĕршывăн историйĕнчен

Александр Невский

П. ПАВЛЕНКĂ

1242 ҫулхи апрелĕн 5-мĕшĕнче новгородеҫсем, Ҫурҫĕрхĕвеланăҫ Руҫри пĕтĕм хресченсем пулăшнипе, вырăссен авалхи ҫĕрĕ ҫине кĕресшĕн тапăнса пыракан нимĕҫсемпе пулнă вăрҫăра историллĕ ҫĕнтерӳ тунă.

Ҫав аслă ҫапăҫăва, Чудск кӳлли ҫинче пулнă йе Пăр ҫинчи ҫапăҫу тенĕ йатпа историне кĕрсе йулнăскерне, епĕ „Александр Невский"*) сценари никĕсне хутăм. Анчах манăн сценари кĕрешĕве ҫеҫ кăтартса памаст. Епĕ XIII-мĕш ĕмĕрте монголи ҫарĕсене тата нимĕҫ палачĕсене хирĕҫ кĕрешекен Руҫе, тулти хăрушлăхсем пуснипе пирвайхи хут пĕтĕҫекен Руҫе тата ҫавăнтах палăракан полководеҫа Невскине кăтартса пама шутлатăп.

Вăрҫă искусствин историкĕсем Александр Невскине ансăр вырăн панă, анчах та XIII-мĕш тата XIV-мĕш ĕмĕрсенчи хроникăсенче унăн йачĕ халăх хушшинче чи йуратнă герой йачĕ пек сарăлнă.

Вăл тунă икĕ ҫĕнтерӳ: пĕри Нева шывĕ ҫинче шведсене ҫĕнтерни, тепри—Чудск кӳлли ҫинче нимĕҫсене ҫĕнтерни,— авалхи Руҫăн кунҫулне йаланлăхах татса паракан, историллĕ паллă вырăн йышăнакан ҫĕнтерӳсем пулса тăраҫҫĕ.

Вĕсем XIII-мĕш ĕмĕрте Руҫ вăрҫă тĕлĕшпе малта тăракан ҫĕршыв пулни ҫинчен, унăн полководеҫĕ аслă, пултарулă стратег пулни ҫинчен калаҫҫĕ.

Ҫав тапхăрти халăха, хуласемпе йалсене, демократиллĕ Новгород хулине, йулашкинчен, нимĕҫсем арканса пĕтнине кăтартас тетĕп епĕ.

Совет ҫĕрне ывăхса ăмсанакан нимĕҫ фашисĕсемшĕн вĕсен пирвайхи хут Руҫа туртса илес ĕмĕчĕ татăлни ҫинчен калакан историллĕ справкă питех те вăхăтлă пулать. Ҫичĕ ĕмĕр кайарах вĕсем тума пултарайманнине малашне те нихăҫан та пурнăҫлама пултараймĕҫ. Ĕҫ танлаштарса пăхнинче мар. Ҫавăн чухлĕ тахҫан авал пулнă событисене хаљхипе танлаштарма, паллах, йурамасть. Анчах та, Германи историйĕ намăсланса именнипе шарламасăр тăнă событисем ҫинчен аса илтерни нихăҫан та чăрмантармасть. Руҫ хăй государствă пулма тытăннă вăхăтсенче те ĕнтĕ нимĕҫсене паттăрăн ҫĕмĕрнĕ.

Чудск кӳлли ҫинче пулнă ҫапăҫун сцени

(Сценари сыпăкĕ)

Выљакансем:

Александр Невский— Перейаслављ кљаҫĕ, вырăс дружинĕсен пуҫлăхĕ.

Василий Буслай— Новгород пйатисотĕнникĕ.

Гаврило Олексич— ҫавах.

Псковитанкă Васмлисă— Псковри нимĕҫсем вĕлернĕ войеводăн хĕрĕ.

Кољчужник Игнатий — Новгородри алăстаҫ.

Пелгусий — манах.

Твердило —нимĕҫсене сутăннă войевода.

**
*

Апрел уйăхĕнче сивĕ те ҫилле ҫанталăк тăрать. Йĕпе йур, ҫăмăр текех дружиниăна йĕпетет. Александр сăрт ҫинчен кӳлĕ ҫинелле пăхса тăрать. Акă ăна нимĕҫсем те курăнма пуҫларĕҫ. Вĕсем савăл йевĕрлĕн малалла шăваҫҫĕ.

—Сысна!*) Сысна! Авă вăл, — шăвлаҫҫĕ вырăссен отрйачĕсенче.

Тул ҫуталать. Хĕвел айалта-ха. Ҫанталăк тĕксĕм тăрать.

—Ҫăл пире, вырăс ҫĕрĕ,—тет те Александр, хамăрăннисене пĕлсе тăма систерет.

Пиксене икĕ алла тытнă, щитсемпе хупланнă нимĕҫсем хуллен вырăссем патнелле пыраҫҫĕ.

Вырăссем тăлăпсене тата армйаксене хывса пăрахнă, хăшĕ-пĕрисем ҫăматтисене те хывнă. Кӳлĕ патне Новгородран лавсем пыраҫҫĕ. Лавсем ҫинчи хĕрарăмсем вак патĕнче лашисене шăвараҫҫĕ.

Чудск кӳлли ҫинче вăрҫă акă халех пуҫланмала. Воронйи тенĕ чул ҫине улăхса кайнă Александр рыцăрсен колоннисем малала вăйлăн шунине пăхса тăрать. Вĕсем хăвăрттăн, йур ҫинче тусан кăларса килеҫҫĕ.

Новгородеҫсен полкисенче пăшăлтатнă, ахлатнă, йатлаҫнă. Воеводсем час-часах Александр ҫине пăхса илсе сăнă, тытма пиксенекен бойеҫсене хыттăн йатланипе чарса тăнă. „Сысна" хăвăрт малала пынă. Александр Буслайа ҫапла каланă:

— Ротăн вăтаҫĕрне ил те, хăвăн пуҫна хур, анчах сыснана пĕр сехетлĕхе чарса тăр.—Вăл кӳлĕ ҫине пăхать те, новгородеҫсен лавĕсене курать, унтан ҫапла калать:— лавсене ҫул урлă ларт, лашасене выртар.

— Ăнланатăп,—тет Буслай, унтан кљаҫпа тата таврара тăракансемпе сывпуллашать те Гаврил Олексича ыталаса тытса, новгородеҫсен фрончĕн варрине сиккипех ĕрĕхтерсе кайать.

„Сысна" вырăссем ҫинелех хумханса пырать. Александр Гаврил Олексича ҫапла калать:

— Гаврило, есĕ сулахай йенне тăр. Перейаславле тата Суздале ил, вара нимĕҫсем Буслай ҫине тапăнма пуҫласанах айакран пăрăнса кай та, ху тапăнма тытăн. Ăн васка. Епĕ сылтăм йенчен тапăнатăп.

Гаврило Олексич ним шарламасăр, савăнăҫлă кљаҫ патĕнчен фронтăн сулахай йеннелле каҫнă, вăл хытă хускалнă. Новгородеҫсем, чышкăсемпе ҫапăҫнă чухнехи пекех, кăшкăраҫҫĕ. Буслай вĕсене чарса тăнă. Ансăртран хăйулисем ӳпкăпĕ нимĕҫсене хирĕҫ тухать.

Лашасем чупнипе пăр ҫинче хĕлхем тухса пырать.

Хăйула новгородеҫсем вăйлăн кăшкăраҫҫĕ, анчах вĕсем нимĕҫсемпе вăрҫма тытăнсанах ҫĕр ҫине персе анаҫҫĕ. Вуншар лашасем тата новгородеҫсем пăр ҫинче, рыцăрсен лашисен урисене айĕнче, ҫапаланса выртаҫҫĕ. Савăл йевĕрлĕн шăвакан фронт варринче пыракан нимĕҫ салтакĕсем вĕсене пуртăсемпе касса вĕлереҫҫĕ. Вырăссен стройĕ тăрăх сасă йанраса кайать, тăшмана ылханнă сасă. Хăшпĕрисем иккеленеҫҫĕ.

— Маж честнайа!—новгородеҫсем хушшинче йанăрарĕ пĕр ҫивчĕ сасă.

—Мать честнайа! Кунта та „Сысна" новгородеҫсем ҫине тапăнчĕ. Унăн малта пыракан рыцăрĕсем вырăссен хушшине кĕрсе карĕҫ те, вырăссен звĕнине пĕр самантрах аркатса тăкрĕҫ. Вырăссен ҫынсăр йулнă лашисем курăнчĕҫ. Рожоксем тата барабансем йанрама чарăнчĕҫ. Буслайа ут ҫинчен ӳкерчĕҫ, вăл ҫавăнтах йут ут ҫине сиксе ларчĕ.

— Хытăрах ăшалăр, господа новгородеҫсем!—кăшкăрчĕ вăл пуртăна нимĕҫсен сăннисене татса пынă майăн.

Анчах та фронтăн вăтаҫĕр пайĕ кайала хăйсен лавĕсем патнелле чакать.

Псковитанкă, йенерлемен утпа Буслай патнĕ вĕҫтерсе пычĕ те:

— Лавсене илсе тухмала-и?—тесе кăшкăрчĕ.

— Цыц! Аҫта тăран, ҫавăнтах вил,—ответлерĕ ăна Буслай.— Ҫунасемпе картласа хур. Ăнланатăн и?

Буслайăн полкĕсем лавсем патне пырса тăчĕҫ—урăх ниҫта та чакма ҫук. Ҫунасемпе лашасем хушшинче ерех тултарнă пичкесем тата ҫăкăр хунă корзинкăсем ҫинче такăна-такăнах ҫапăҫаҫҫĕ.

„Сысна" варне кĕрсе ҫитрĕ те чарăнчĕ. Унта вара сылтăмран Александр, сулахайран Гаврило Олексич тапăнма пуҫларĕҫ.

— Руҫшăн!—кăшкăрчĕ Александр.

— Руҫшăн!—ответлерĕ Гаврило Олексич.

Лавсем патне пырса хĕстернĕ Буслай хăй ҫине тапăнакансене хирĕҫ ҫапăҫнă.

„Сысна" хуллен кăна Буслайăн саланса арканнă фрончĕн варринелле шунă. Лавсенчи хĕрарăмсем ҫул урла ҫунасем лартнă, рыцăрсем ури айне лавсенчи йапаласене пăрахнă. Акă пĕр ҫуран рыцăр лавсем патĕнчи ҫынсене хăратса ҫунасенчен тунă баригадă ҫине улăхса тăрать, ҫавăнтах вăл, новгородеҫсем пайан ҫеҫ утсене шыв ĕҫтернĕ вакка анса кайать.

— Пăр кас!—кăшкăрать ăна Псковитанкă. Ҫав самантрах ҫунасем тăракан лини хыҫĕнчи пăр ҫинче вуншар ваксем, шăтăксем уҫăлчĕҫ. Ҫав вăхăтра „Сысна" урапасемпе ҫунасене хăй хыҫне хăварать: савăл йевĕрлĕн тапăнса пыракансен йывăрĕшпе пăр та авăнnă, ваксенчен шыв тапса тухнă. Утсем тата рыцăрсем речĕсене пăсса йĕне пăр ҫинче шунă. Вĕсен тимĕр тăхăннă урисем ҫинче шыв шăннă. Урасем пăр ҫумне сыпăҫнă. Нумайĕшĕсем ваксене анса кайнă. Кунта вара Буслайăн иккĕмĕш утне вĕлернĕ. Вăл вара ҫапăҫăва ҫуран кĕрсе кайнă. Акă вăл рыцăр лашине мечпа хырăмран чикрĕ, лаша хăйĕн йăвăрăшпе ун ҫине ӳкрĕ те ăна хăй айне лучăркаса хучĕ.

— Ваҫкă вилчĕ!—кăшкăрчĕҫ лавсем патĕнче,—пĕтет Буслай.

Сылтăмран нимĕҫсем патне Александр сывхарса пынă. Сулахайран Гаврило Олексич. Буслай тарăхнипе ҫухăрса хăй ҫинчен рыцăр утне сирсе пăрахнă, йулашки сăнчăр тумне вĕҫсерне, сăхманне ҫурса пăрахнă. Вара, нилĕк таран ҫанна ҫарамас тăрса йулнă пулин те, ҫапах тăрлаланăскер атакăна кĕнĕ.

— Ваҫкă кунта!—кăшкăрнă вăл,—епĕ кунта, чĕрĕ епĕ!

Унта та кунта та пăр ҫурăлнă.

— Вакла! Вакла!—кăшкăрнă хĕрарăмсем.

— Асăрхăр, хусамăр урусене ан касăр!—савăнăҫлăн ответленĕ вĕсене хирĕҫ Буслай.

Халĕ ĕнтĕ новгородеҫсем вăйла, аркаса пĕтмен анчах тапăнма прĕклĕх сухатнă нимĕҫсене виҫĕ йенчен ҫавăрса илнĕ, вĕсене малала кайма чарса пĕр вырăнтах тытса тăнă.

„Сысна" хăйĕн сăмсине ҫĕклеме хăтланнă. Рыцăрсем тачăнрах тăрса шăваннă. Буслай вĕсенçе хирĕҫ пынă, анчах рыцăрсен сăннисене ҫĕмĕрсе кĕме хăват ҫитеймен ун.

Ҫавна кура Александр мĕн пур вăйне пухса, нимĕҫсене фронт айаккинчен пырса лучăркаса тăкнă. Гаврило Олексич, хресченсемпе пĕрле пуҫтарăнса, сулахай флангран ҫĕмĕрсе кĕрет, тĕп колоннăна хӳтĕлесе тăракан рыцăрсене ҫĕмĕрет. Унпа йунашарах тăрса кљаҫ ачисем: Павша войеводăн ывăлĕ Михалка тата Ҫаввă кĕрешеҫҫĕ.

Пелгусий манахпа сăнчăр кĕпе маҫтăрĕ Игнат ҫапăҫура кљаҫа сыхлаҫҫĕ. Йаланах савăнăҫла Игнат кунта та хăйне-хăй ĕненет:

— Лайăх тавар!—тет вăл, хĕҫпе рыцăра сăнчăр тумĕ ҫине ҫапнă май вутхĕм сирпĕтсе:—Лубекен тавар пулĕ!

Ҫапăҫу ҫине те вăл тимĕрҫĕ куҫĕпе пăхать. Хăйĕн нљомне тăшман хĕҫҫи пырса ҫапăннă самантра та йаша ҫинчен кăшт ҫеҫ йăванса анмасть пулин те, хăй ҫапах калать:

— Тфу, мурилешшиĕ! Ну-и хĕҫ!

Александр кулать.

— Пирĕн хĕҫсемпе касма вĕсен сăнчăр кĕписем тĕрексĕртерех мар-и, а?

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

*) Сценарине С. М. Ейзенштейнпа пĕрле тунă. П. Павленкă.

*) Нимĕҫсем савăл пек стройпа сирсе кĕнине вырăссем „свинья тесе чĕннĕ.—Ред.

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Хĕвелтухăçри (Арагонири) фронтра Теруелпе Кастеѕьон провинцисем хушшинчи чикĕри тусенче халĕ те хайар çапăçусем пыраççĕ.

Альфамор секторĕнче республиканĕцсем пăлхавçăсен наступленине сирсе пăрахнă.

Куйевас де Винрома районĕнче (Сан Матеоран çурçĕрпе хĕвелтухăçнеле) республика çарĕсем пăлхавçăсен пилĕк атакине сирсе пăрахнă. Пăлхавçăсен пысăк çухатусем пулнă.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

* * *

Майăн 12-мĕшпе 13-мĕшĕнче Германи самолѕочĕсен ескадрилисем Барçелонă çине темиçе хутчен те пырса тапăннă. Самолѕотсем çинчен пăрахнă бомбăсенчен 53 çын вилнĕ тата 122 çын аманнă. Вилнисем хушшинче çамрăк ачасем 7 пулнă.

Майăн 13-мĕшĕнче çĕрлехине фашиссен авиацийĕ Валенçи çине бомбăсем пăрахнă. Миçе çын вилнипе аманни халĕ паллă мар.

(ТАСС).

Мексикăпа Англи хушшинче дипломатилĕ çыхăнусем татăлнă

Мексикă Англипе дипломатилĕ çыхăнусем тытма чарăннă. Мексикăн Лондăнри посолне кайала чĕнсе илнĕ. Çыхăнусем тытма чарăннин сăлтавĕ Мексикă правительстви йут çĕршывсен Мексикăри кампанисен харпăрлăхне, тĕслĕхрен Англин нефт кампанийĕсен харпăрлăхне конфискацилесси çинчен тăракан ыйту пирки Англи тытакан позици пулса тăнă.

* * *

1938 çулхи мартăн 20-мĕшĕнче Мексикă правительстви Америкăпа Англин 17 пысăк нефт кампанийĕсен харпăрлăхне конфискацилерĕ, вĕсем Мексикăри саккунсене пăхăнассинчен пăрăннă пулнă.

1937 çулхи ийунь уйăхĕнче Англин нефт промыслисенче 18 пин рабочи забастовкă тунă, вĕсем ĕç укçине ӳстерме тата 40 сехетлĕ ĕç ерни тума ыйтнă. Мексикă правительстви рабочисен требованийĕсем майлă тăнă. Нефт кампанисем çав требованисене йышăнман.

Çакăн хыççăн Мексикă президенчĕ Карденас йут çĕршывсен нефт кампанисен харпăрлăхне пуринне те конфискацилесси çинчен пĕлтерчĕ.

(ТАСС).

Бельги правительстви отставка тухнă

ПАРИЖ, майăн 13-мĕш. (ТАСС). Брюççелрен пĕлтернĕ тăрăх, Бельгин Жансон йертсе пыракан правительстви отставка тухнă.

Атăл çинче

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Амойри лару-тăру

Йапони çарĕсем Амой çине сывлăшран, тинĕс çинчен тата çĕр çинчен хыттăн персе тăнине пăхмасăрах, хăйсен базисенчен тăталса йулнă Китай чăçĕсем йапонĕцсене хирĕç хыттăн тăраççĕ, вĕсем тĕрлĕ пунктсене хăйсем аллинчех тытса тăраççĕ. Китай çарĕсен тĕп вăйĕсем материк çине кайала чакнă. Икĕ йенчен те пысăк çухатусем пулаççĕ.

Майăн 13-мĕшĕнче Англи пăрахучĕ Амойрен Гонконга (Китайăн кăнтăр пайĕнчи Англи колонийĕ) тарса тухнă Китай çыннисене 2.300 çын илсе çитерчĕ. Пăрахут капитанĕ йапонĕцсем 50 китайĕца саварса илсе, вĕсене пулеметсенчен персе вĕлерни курни çинчен каласа панă.

* * *

Амой (Фуцзянь провинци) вăл — пысăк порт, ун витĕр йут çĕршывсенчен Китайа таварсем илсе пыраççĕ. Амойра 114 çын пурăнать.

Йулашки темиçе çул тăршшĕнче Йапони, Китайăн кăнтăр çыранĕнче хăйĕн позицисене çирĕплетес шутпа тата малашне Китай çĕршывне шаларах кĕрес шутпа, Фуцзянь провинцинче, уйрăмах Амойра çирĕп база тума тăрăшнă.

(ТАСС).

„Платон Кречет“ лартрĕç

Турхантри культура çуртĕ çумĕнчи драмкружок çак кунсенче Украинĕцсен паллă драматургĕ, ССР Сойузĕн Верховнай Совечĕн депутачĕ А. Корнейчук çырнă „Платон Кречет“ пйессăна выляса пачĕ.

Драмкружок пйессăна нумай вăхăт тата тĕплĕ хатĕрленнĕ. Курма ынă ватă колхозникĕсем, йалти çамрăксем пйессăна пит йуратса, интересленсе пăхрĕç. Халĕ драмкружок пйессăна ытти колхозсене кайса лартма хатĕрленет.

К. Павлăвă.

Михаил Белов

ПĔР КАÇХИНЕ

Заставă начальникĕ чĕнсе илчĕ те:

— Акă сана пакет, пĕр сехет хушшинче ăна ес хамăр кӳршĕри заставăна çитер! — терĕ.

— Йурать, йулташ начальник. Приказ вăхăтра пурнăçланĕ.

Начальник, тахçантанпа пĕрле вылляса ӳснĕ йулташ пек, манăн хулпуççинчен савса илчĕ, тепĕр хут хăйĕн приказне çирĕплетрĕ. Йулашкинчен вăл:

— Ну, хатĕрлĕх çитнĕ? Васка! — терĕ.

Епĕ хамăн постра çӳрекен чи çывăх, чи йуратнă Йуркă йатлă йытăпа Полкаш лаша патне тухрăм. Пакета йĕнер кĕççи айне пытартăм. Утланса ларнă-ларманах манăн Полкаш йульă пек хапхаран тухса вăркăнчĕ.

Полкаш хĕрнĕçемĕн хĕрет. Пынăçемĕн йуртти ун ӳсĕнет. Анлă кăкри уçăлнăçемĕн уçăлать. Унăн урисем çĕре те тивмеççĕ, тейĕн. Вăл хăйĕн çурăмĕ çине лартнă йулташне тата начальник панă пакета кӳршĕри заставăна вăхăтра çитерес тĕлĕшпе, кайăк пек малала ыткăнать. Пирĕн хыçран Йуркă та йулмасть. Вăл пĕрре мала иртет. Тепре кайа йулать. Çавăнтах çул айккине те кĕре-кĕре тухать. Çул çинчи телефон йупийсем тата çăлтăр пек йалтăртатса тăракан хула çутисем вĕлтлетсе çеç хыçала тăрса йулаççĕ.

Вăрмана çитнĕ çĕре кусран çыхнă пек тĕттĕмленчĕ. Нимĕн те курăнмасть. Çил сукран сĕм вăрман кашлани те илтĕнмест. Полкаша хырăм айне атă кĕлли пе тĕртсе тата та хытăрах каймалли çинчен систертĕм. Нагана алла илтĕм.

Çапла епĕр касхи шăплăхра вăрманăн вăта çĕрне çеç çитнĕччĕ, сасартăк пире хупăрлакан тавралăх хайаррăн йайрарĕ. Пĕр пульă ман умранах шăхăрса иртрĕ. Анчах разведкăра çӳреме вĕреннĕ Полкаш пăшал сассинчен хăраса тăмарĕ. Вăл пуçне айалала усса çеç вĕçрĕ. Пульăран сыхланас тесе епĕ те сулахай аллăмпа унăн мăйĕнчен ыталарăм та, ĕнси çине йапшăнтăм. Акă вăрах та вăхăт иртмерĕ, пĕтĕм çап-çурăма вут пек пĕçерсе кайнине Полкаш çинчен чикĕнсе те антăм. Наган ман аларан тухса ӳкрĕ. Полкаш чарăнчĕ. Ман çинеле пăхать.

Мĕн тăвас-ха? Начальникăн çекретлă пакетне сывă пуççăн, пĕр çапăçмасăрах диверсантсен аллине хăварас-ши ĕнтĕ? Хĕç-пăшалсăр, кĕрешӳсĕр, вилĕме пăрăнас-ши? Вăл кăна та мар-ха, заставăн калама çук пысăк çекретне уçмала-ши?

Çук, тăшман аллине парăнма йурамасть.

Хамăн вăй чакнăçемĕн чакать. Полкаш та пĕр хускалмасăр вырăнĕнчех пусса тăрать. Аларан тухса ӳкнĕ нагана хыпашласа пăхрăм. Çук. Йулашки вăйăмпа мĕнле тăрăшса шырасан та тупаймарăм. Йуркă та манăн тавра йавăнса темĕскер çухатнă пек, сăмсипе шăшла-шăшла пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çӳрет.

Мĕн тăвас? Вăй пĕтнĕçемĕн пĕтет. Тăшмансем те çывхарнăçемĕн çывхараççĕ. Лаша çине утланаймастăп. Утланмасăр вырăнтан та хускалаймастăп. Пакет та хăт хам çумра мар. Хам çумра пулсан, çуркаласа тăкаттăм, йе чăмласа çăтаттăм.

Çапла хăварт кăна шухăшласа, çул хĕрринчен вăрманала шăвăнма тытăнтăм. Пĕр хĕрĕх алла метр та айаккала кайса ĕлкĕреймерĕм. Пĕчĕк çеç пĕр лупашкана йăванса та антăм.

Пăшал сассисем çывхарма пуçларĕç. Манăн Полкашпа Йуркă та епĕ ӳкнĕ çĕрте тăма йураманнине сисрĕç пулас. Çак самантра вĕрем ĕрĕхсе кайни лупашкана кăшт çеç илтĕнсе йулчĕ. Тата пĕр самант вăхăт иртсен пăшал сассисем лăпланчĕç. Пурĕ те тĕрлĕрен намăс сăмахсемпе вăрçса йулни çеç илтĕнчĕ.

Вĕсем ахăрнех епĕ кайала çаврăнса вĕсен аллинчен вĕçерĕнтĕм тесе шухăшларĕç пулĕ. Çĕр çав тери тĕттĕм. Куçран пырса тĕртсен те ним курăнас çук. Сивĕ. Хам сиксе чĕтретĕп. Суранăм тӳсме çук ыратать.

Пĕр сехет çурă та вăхăт иртмерĕ, тапăртатса çывхарнă лаша ури сассисем илтĕнме пуçларĕç. Итлетĕп. Чăштăр-чăштăр тунă сасă çывхарнăçем çывхарать. Тата лайăхрах итлеме пуçларăм. Çук, пĕртте етем ури сасси пек мар. Çук. Йе йытă йе тискер кайăк. Çĕнĕрен сехрем хăпса тухрĕ. Мĕн тăвас? Вĕт ман аллăмра нимĕнле хĕçпăшал та çук. Çитменне вырăнтан хускалмашкăн вăйăм та çук. Чăштăртатнă сасă йалтах çывхарчĕ. Нăш-нăш туса шăршлани илтĕнчĕ. Мĕн пулсан пулать... Йуркă! — тесе хуллен кăна сасă патăм. Унччен те пулмарĕ манăн умма çывхаракан Йуркă сиксе те ӳкрĕ. Вăл малтан ман çумма йапшăнса выртрĕ. Унтан алла шăршласа пăхрĕ. Питрен çуласа илчĕ. Вара каллĕх çул хĕрнеле чупса тухрĕ. Чупса тухрĕ те хав-хав тесе пĕр икĕ хутчен вĕрсе илчĕ. Йуркă вĕрнине илтсен ун йенеле йуртта тарса хĕрлĕармейĕцăсем çитрĕç. Тӳсме çук савăнтăм. Анчах пакета тивĕçлĕ вырăна çитерейменнишĕн калама çук хурлантăм.

* * *

Умра тăван заставă.

— Амантăн-им? — ыйту пачĕ командир.

— Амантăм, — терĕм епĕ хуллен.

Йĕнерчĕк айĕнчен пакета илчĕ командир.

— Ку пур, — терĕ вăл, ман çине пăхса. — Наган ăçта?

— Çук, — терĕм епĕ. — Çухатрăм. Айăплă епĕ.

Çав вăхăтрах Йуркă манăн умма пырса тăчĕ. Унăн çăварĕнче... наган. Калама çук хаваслантăм. Ыталарăм епĕ ăна. Чуптурăм.

* * *

Ку калава мана кавалерис йулташăм каласа пачĕ:

— Çапла, — терĕ вăл йулашкинчен. — Ку ĕç пулнăранпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Епĕ халĕ те çав заставăрах. Полкаш та, Йуркă та сывă. Начальникрен мĕнле кăна вăхăтра, мĕнле кăна приказ пулсан та, ăна ăнăçулăн пурнăçлама йаланах епĕр хатĕр.

Александр Невский

(ИУЛАШКИ)

Ăçтан-ха! — пат татса ответлет Игнат. — Хĕç вăл мĕн калас... Александр Иарославич... Вăй хĕçре мар вĕт, вăй хулпуççи тĕрекĕнчен килет... — çавăнтах вăл хăйĕн типшĕмрех те ансăртарах хулпуççине çăмăллăн çавăркаласа сиктерет.

Çапăçу — йăвăр ĕç, анчах новгородĕцсемшĕн тин çеç пулакан çĕнĕ ĕç мар. Вырăс çыннисем нимĕн чĕнмесĕр çапăçма пĕлмен. Кăшкăрнă вĕсем, йатласса каланă, çавăнтах йурă йурланă. Лавсем патĕнчисем вăхăтран-вăхăта бубнăсене çапса шăнкăртаттарнă, рожоксемпе кăшкăртнă, суранланнисем йурă йурласа хăйсен йулташĕсене хавхалантарнă.

Ухă сăннисен пĕлĕтне хăваланă май, нимĕçсем кăшкăрса-ахăрса новгородĕцсем çинеле ывтăннă, лашасен урисене йарайара тытнă вĕсем, хăйсем новгородĕцсен урисен айĕнче йăваланнă. Буслай хăйĕн хĕçĕпе çиларманĕн çунатти пек çавăрттарса ĕçленĕ. Хĕç хуççăласа икĕ пайа уйăрăлнă.

— Игнашкă тимĕрçĕн ĕçĕ нимĕне те тăмасть, — кăшкăрнă Буслай.

Ăна тепĕр хĕç панă, анчах ăна та вĕрăм пуллĕ те ырхан, кăвакарнă уççилĕ рыцăр аларан çанса ӳкерет. Буслай кайала чакать, пăхкалать вăл, мĕнле те пулсан хĕçпăшал, çак хăрушлăхран тухма мĕнле те пулсан май шырать. Акă вăл çунасенчен купаласа тунă барикадă патне çитсе хĕсĕнет, — тăшман хĕçĕсенчен хăтăлма ăна нимĕнле май та çук. Тавранана хăвăрттăн пăхкаласа илет вăл. Лав çинче Псковитанкăн суранне сыхса тăраççĕ. Буслай хăрушлăхра иккенне туйать Псковитанкă, санитаркăсене тĕртсе йарать те, çунă çинчен сиксе анать, çуна туртине хуçса илсе Буслайа парать.

— Ех, маттурскер хĕр!

Псковитанкă панă çуна туртипе Буслай рыцăрĕ çапать. Шлем хыттăн шанлатса рыцăрăн пуçне хупласа хурать. Буслай иккĕмĕш хут сĕкленсе çапать. Рыцăр персе анать.

Сулахай флангра Александрăн ĕç çавăнăçлăн пырать.

Князь ăнăçулăн кĕрешет. Шӳт тăвать. Нимĕçсен кăкрине хĕç тăрăнтарнă май, вăл çапла калать:

— Çак хĕççе ăшăнта илсе çӳре, ăна ĕç часах çĕртеймĕн: Кăларас тесен — кăларса ывăтаймăн.

Гаврило Олексичăн та ĕç аван пырать. Вăл нимĕçсен сулахай флангне çĕмĕрсе кĕнĕ, часах колоннă варринелех персе кĕме те çăмăллăнах пултарать.

Гаврило Буслай патне çывхарнăçемĕн çывхарать. Вĕсем пĕрпĕрин çине пăхапăха кĕрешеççĕ.

— Сан ĕçсем мĕнле, Гаврило, курăнмасть-ха! — кăшкăрать Буслай. — А, ну! Кăтарт чăрсăрлăхна.

— Акă, кур! — хĕçне выляса ответлет Гаврило Олексич.

Рыцăрсен иккĕмĕш шеренгине çĕмĕрсе кĕреççĕ ĕнтĕ, ун урлă орден магистрĕ граф Герман Балк хăйне хӳтĕлесе çӳрекенсемпе хупăрланса тăни курăнать. Вăл йинçех те мар. Колоннă сапаланнă. Халĕ ĕнтĕ ăçта пăхнă унта, пур тĕлте те çапăçаççĕ, пĕр çын çине пĕр çын кĕреççĕ. Новгородĕцсен полкĕсен йалавĕсем, рыцăрсен значокĕсем, шлем çине çакнă тĕк хӳресем, чудскăсен кабан тирĕнчен çĕленĕ çĕлĕкĕсем — пурте пĕр купара варкăшаççĕ.

— Çĕнтерӳ пирĕнте! — кăшкăрать сылтăмра пĕр сасă — Александр сасси. Вăл шурă лашине сиктерсе, хăйĕн çулĕ çинче çапăçакансене тĕрткелесе варринеле кĕрсе кайать. Унăн сăнĕнче уйăври хаваслăх çиçсе йалкăшать. Кĕреçе тăвакан князь мар вăл, князь-полководĕц.

— Магистра кӳрĕр, кунта! — команда парать вăл.

Сăнăн-тăк, ĕнтĕ сăнăн, — ответлет ывăнса çитнĕ, нимĕçсен йунлă лаши çине утланса çапăçакан Буслай.

Магистрпа Александр тавра пуçтаралнисем самантлăха пĕр сăмах чĕнмесĕр тăраççĕ. Вăл вăхăтри çар салтакĕсем хăйсен çулпуçĕсене вăрçă уйĕнче курма çав тери йуратнă, çулпуççене нимĕн хăрамасăр вăрçа кĕме никам та чарма пултараймăн, чарма йураман.

Магистрпа Александр пĕри тур лаша çинче, тепри шурă лаша çинче — сăнĕсемпе пĕрне-пĕри хирĕç тăнă.

— Кĕлту турра, магистр! — тесе кăшкăрнă Александр, латын чĕлхипе.

Чылай кĕрешнĕ хыççăн, сăнăсем хуçăлса ваннă. Йуланутсем çапах йĕнерсене çухатман. Вĕсен лашисем тĕлĕм çывхарнине туйса кĕçеннĕ, унтан шăлĕсене сыртса мĕн пур вăйĕсемпе хире-хирĕç вĕçтернĕ.

Чудцăсем пĕр çĕре пухăнса, хĕççене айалала усса тăнă. Вĕсен çулпуçĕ, шлемне хывса, кукша çамки çинчи тарне аллипе шăлнă латынла хрес хывса сăхсăхнă. Çыран хĕрринчи сăрт çинче тăракан епископ турра кĕлтăвас шутпа аллисене çӳле çĕкленĕ. Манахсем пĕр харăссăн молитвă йурласа йанă. Магистрăн знаменосéцĕ хире-хирĕç тăрса çапăçакансем патне васкавлăн чупса кайнă, вăл хĕвелтухăç князĕн ӳчĕ çинче — князь вилсен — Хĕвеланăç йалавне çĕклесшĕн хыпаланнă.

Епископ хыçĕнче тăракан Твердилă, пĕррĕ вырăсла, тепре латынла сăхсăхса, татти-сыппиcĕр кĕлтунă:

— Турăçăм хăтар...

Магистрпа Александр сăнăсемпе хăмсарса хайаррăн çапăçнă, çав самантрах князăн сăнни ванса айккинеле ывтăннă.

— Ах! — тенĕ вăрçă уйĕ. Вăрçă уйĕн шăплăхĕнче тăма нихçанхинчен ытларах хăрушă пулнă.

Александр такам аллинчен пуртă туртса илсе, лашипе пĕрле Магистр çине сикнĕ, вара çакă пуртăпа — вырăссен такçан авалхи хĕçăпалĕпе — Магистр алли çине лартнă. Татăлнă алăпа пĕрле хĕç те айкинеле сирпĕнсе ӳкнĕ. Нимĕç çавăнтах лаши çинчен сĕтĕрĕнсе анма пуçланă.

Пĕтĕм кӳлĕ анлăшĕпе кăшкăрашу тăвăллăн кĕрлесе кайнă. Пурте тĕрлĕ çĕрелле сапаланса чупнă. Магистр чĕркуçланса ларнă та, сывă йулнă хăрах аллине çӳлелле çĕкленĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита №242.

КĔСКЕН

Колхозăн клуб пулать. Малти Тракри (Трак р.) „Çĕнтерӳ“ колхоз 250 çын вырнаçмалăх клуб лартма тытăннă. Клуба РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ тĕлне туса пĕтереççĕ.

Н. Петров.

Вăрçăлă турăсăрсен сойузĕн йачейки. Кăкшăмри (Вăрнар р.) вулав çурчĕ çумĕнче вăрçăлă турăсăрсен сойузĕн йачейки организацилерĕç. Члена 35 колхозник кĕчĕç. Йачейкă уйăхра икĕ хут „Турăсăр“ йатлă çтена хаçачĕ кăларать.

П. Макарăв.

Колхозри драмкружок. Çак кунсенче Испуханри (Елĕк р.) „Самолѕот“ колхозри çамрăксем 22 çынран драмкружок организациленĕ. Кружока В. Одинцов йулташ йертсе пырать. Драмкружок членĕсем „Айдар“ пйесăна Килтеш, Йурмейкейкинă, Писеп йалĕсенче выляса пачĕç.

И. Кутузов.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕТНЕ СУЙЛАС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН ИШЕК ОКРУГ СУЙЛАВ КОМИÇÇИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Ишек округ №13 суйлав комиççин адрĕсĕ çапла: Ишек, колхоз правлени çурчĕ, 1—2-мĕш пӳлĕмсем.

ПĔЛТЕРНИ

1938 çулти майăн 18-мĕшĕнче ПСК(б)П Облăçри комитечĕн парти вĕренӳ çурчĕн Лекторийĕ „Первая среди равных — РСФСР“ йатлă темăпа лекци туса иртерет.

Лекци „Строителсен клубĕнче“ пулать. Пуçламĕшĕ 12 сехетре, кăнтăрла.

Лекцине кĕме билетсем илме шутлакан организацисен парти вĕренӳ çуртне пымала, телефон № 3-83.

Парти вĕренӳ çурчĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

ПĔЛТЕРНИ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи майăн 5-мĕшĕнче 435-мĕш № постановленийĕ тăрăх вылях-чĕрлĕх сутăн илме организацилекен йармăркăсем Чăваш республикĕнче çак срuксенче тата пунктсенче пулса иртеççĕ.

Патăрйелĕнче 1938 çулхи майăн 18, 19, тата 20-мĕш кунĕсенче.
Выл-пасарĕнче (Елĕк районĕ) — майăн 19, 20 тата 21-мĕш кунĕсенче.
Нурăсра (Вăрнар районĕ) — майăн 24, 25 тата 26-мĕш кунĕсенче.
Шупашкарта — майăн 27, 28, 29 тата 30-мĕш кунĕсенче.
Çĕрпӳре — 1938 çулхи ийунĕн 2, 3 тата 4-мĕш кунĕсенче.
Кавалта — ийунĕн 7, 8 тата 9-мĕш кунĕсенче.
Йелчĕкре — ийунĕн 12, 13 тата 14-мĕш кунĕсенче.
Улатăрта — ийунĕн 1,2 тата 3-мĕш кунĕсенче.
Пăрачкавра — ийунĕн 4-мĕш тата 5-мĕш кунĕсенче.
Хĕрлĕ Чутайра — ийунĕн 7, 8 тата 9-мĕш кунĕсенче.
Канашра — ийунĕн 12, 13 тата 14-мĕш кунĕсенче.

Вылях-чĕрлĕх сутакан колхозсене, колхозниксене тата ĕççынни йединоличниксене вальли суту-илӳ организацийĕсем йармăркăсене çакăн пек таварсем кӳрсе килеççĕ: мануфактурă, трикотаж, çĕлене платйесем, çипсем, пуç тутрисем, сăран атă-пушмак, резинă калушсем, тата ыт те.

Вылях-чĕрлĕх йе кайăк-кĕшĕк сутакан кашни тенкĕ пуçне 50 процентлăх тавар илме пултарать.

Вылях-чĕрлĕх сутма договăр тунă колхозсем, договăр шучĕпе сутмали вылях-чĕрлĕхе йармăрка илсе тухса сутма пултараççĕ.

Вылях-чĕрлĕхе государствă вальли сутăн илессине йармăркăсенче Потребкооперацине Вылях хатĕрлекен кантурĕсем организацилеççĕ, вĕсемех вылăхсене йышăнмалли пунктсем организацилеççĕ.

Йармăркăсенче тĕрлĕрен таварсене сутассине те анлăн организацилеççĕ: бакалейă таварĕсем, гастрономи, кондитер çимĕçĕсем, кӳлмели таврашсем, галантерейă, парфӳмери тата вырăнсенче тунă таварсем пулаççĕ. Столовăйсем, ресторансем, чайнисем пулаççĕ.

Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ.
Чăвашпотребсойуз.

3—1

„Чăвашвăрманпром“ трестне

Вăрманпромхозсенче тата механизациленĕ вăрман пунктисенче йалан тата вăхăтлăх ĕçлеме

шоферсем кирлĕ

Шоферсене вальли уйрăм пӳлĕмсем, хваттерсем пур. Çак адрĕспе пымала: Шупашкар, Урицкайа урамĕ, 36. „Чăвашвăрманпром“ тресчĕ, кадрсен пайĕ. Йе тата тӳрех: Шăмăршă вăрманпромхозне, почтă уйрăмĕ Шăмăршă, рабочи поçолăк; Йĕпреç вăрманпромхозне, Йĕпреç ст. Хусан чукунçулĕ; Улатăр вăрманпромхозне, Улатăр хули, Казанскайа урам, 36; Киреri механизациленĕ вăрман пунктне, Кире станци, Хусан чукунçулĕ; Вăрнарти вăрманпромхозне, Вăрнар станци, Хусан чукунçулĕ.

„Чăвашвăрманпром“ тресчĕн кадрсен пайĕ.

2—1

Чăвашпромсойузра

Малтан ĕçлесе пурăннă рабочисемпе служăщисен „Çĕршыв Оборонине тĕреклетмели“ зайом облигацийĕсене илме пымала.

Облигацисене кăçалхи майăн 20-мĕшĕччен алла пăраççĕ, ку срук иртсен облигацисене перекет кассине параççĕ.

0—1.

Шупашкар хули финанс пайĕ

пур предприйатисене, учреждениcене тата организацисене айалта кăтартнă 47-мĕш номĕрлĕ формă тăрăх рабочисенчен, служăщисенчен тата вĕсемпе пĕр тан шутланакансенчен 1938 çулхи март уйăхĕнче ĕç укçи тăрăх мĕн чухлĕ культсбор илни çинчен 3 кун хушшинче отчот тăратма хушать.

а) рабочисемпе служăщисем.

б) Кооперативлă ертелсене пĕрлешнĕ кустарсемпе ремесленниксем.

Уйăхри ĕçукçи хакĕ тăрăх шутланнă группăсем	Миçе çын	Культсбор укçи тытса йулнă
100 тенкĕ таран		
101 тенкĕрен 140 тенкĕ таран		
141—150		
151—200		
201—250		
251—300		
301—350		
351—400		
401—450		
451—500		
501—550		
551—600		
601—700		
701—800		
801—900		
901—1000		
1001—1250		
1251—1500		
1501—1750		
1751—2000		
2000 тенкĕрен малала		

Учреждениcен, предприйатисен руководителĕсен кăтартнă сведĕнисене срукра тăратмала, майăн 17-мĕшĕнчен кайа йулмала мар.

Шупашкар хули финанс пайĕ

ФИЗКУЛЬТУРĂН

Кĕçĕн преподавателĕсене тата инструктăрĕсене вĕрентсе хатĕрлекен

6 уйăхлăх курса илме

испытанисем 1938 ç. майăн 19—20-мĕшĕсенче пулаççĕ

Шупашкар, Автоклуб çурчĕ (К.-Либкнехт урамĕ, 14).

Испытани майăн 19-мĕшĕнче 11 сехетре кăнтăрла пуçланать.

Испытани программи:

1. Вырăс чĕлхи, 2. Политграмăтă, 3. Математикă—тулли мар вăтам шкулăн 7 клас программипе.

Практикăлă дисциплинăсем:

Çăмăл атлетикă тата гимнастикă ГТО комплексĕ чухлĕ. Испытание тăма ирĕк панисем (чĕннисем) кăтартнă срука вăхăтра çитмелле.

Испытанине пыма тухакан çул укçине, хватершĕн тата апатланма тухакан расхутсене испытани вăхăтĕнче физкультура комитечĕ тӳлемест.

Занятисем кăçалхи майăн 25-мĕшĕнче Йетĕрне хулинче пуçланаççĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕ.

2—1

Гор. Чебоксары, типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 408.